Республиканская библиотека им. Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Сентябрь 18
ЭРНЕКУН
№ 183 (9092)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

„Ялхуçалăхĕн паха отраслĕсенче чылайăшĕнче ĕçсем начар пыраççĕ тесе йышăнса, Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ çапла тума кирлĕ тесе шутлать: юлса пыракан ялхуçалăх отраслĕсене, колхозсене, совхозсене тата районсене малта пыракансен шайне çитерме халех васкавлă та пысăк ĕçсем туса ирттермелле, çапла туса социализмла пĕтĕм ялхуçалăхне хăватлăн çĕклемелле. Задача çакăнта пулать: çитес 2—3 çул хушшинче хамăр çĕршыври халăхăн ӳссе пыракан ыйтăвĕсене апат-çимĕç продукчĕсем çителĕклех парса тивĕçтермелле тăвас пулать, çăмăл промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçне чĕртавар çителĕклĕ парса тăмалла“. *КПСС Центральнăй Комитечĕн постановленийĕнчен.*

ССР СОЮЗĔН ЯЛХУÇАЛĂХНЕ МАЛАЛЛА АТАЛАНТАРМАЛЛИ МЕРĂСЕМ ÇИНЧЕН

КПСС Центральнăй Комитечĕн Секретарĕ Н. С. ХРУЩЕВ юлташ КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕнче 1953 çулхи сентябрĕн 3-мĕшĕнче тунă доклад

Юлташсем! Совет халăхĕ социализмла индустрие аталантарас ĕçре тунă пысăк çитĕнӳсем Коммунистсен партийĕпе Правительствăна хамăр çĕршывра халăха кирлĕ япаласем нумайран та нумай туса кăларас задачăна татса парас ĕçе халех тытăнма май параççĕ.

Аслă Ленин «социализмăн пĕртен-пĕр материальнăй никĕсĕ машинăллă шултра промышленность пулма пултарать, вăл çĕр ĕçне те урăхлатса çĕнетме пултарать»*) тесе вĕрентнĕ. Совет халăхĕ Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе пур енĕпе те аталаннă йывăр индустри туса хучĕ, вăл социализмла экономикăн хăватлă никĕсĕ пулса тăрать. Халĕ, çавăн пек никĕс пур чухне, çăмăл промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçĕн пур отраслĕсене те хăвăрт вăйлатас, халăха кирлĕ япаласем нумайрах туса кăларас ĕçе организацилеме пур майсем те çителĕклĕ, мĕншĕн тесен пĕтĕм обществăн пĕрмаях ӳссе пыракан материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене тивĕçтерсе пырасси социализмла производствăн тĕп тĕллевĕпе тĕп задачи пулса тăрать.

Анчах халăха кирлĕ япаласем туса кăларас ĕçре çавăн пек хăвăрт ӳсĕм тума пирĕн ялхуçалăхне пысăк хăвăртлăхсемпе малалла аталантармалла.

Хальхи тапхăрта халăх хуçалăхĕнчи чи кирлĕ те пысăк задача çакăн пек: йывăр индустрие малалла та мĕнпур майсемпе аталантарса пырса, ялхуçалăхĕн пур отраслĕсене те хăвăрт вăйлатмалла тата çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче пирĕн çĕршыври пĕтĕм халăха апат-çимĕç таварĕсем парса тăрассине нумай ӳстермелле, çакăнпа пĕрлех колхоз хресченĕсен пĕтĕм массин материальнăй пурнăçне тата та ытларах лайăхлатмалла.

Çакна май партин Центральнăй Комитечĕн Президиумĕ çак Пленумра пăхса тухма халех пурнăçламалли пысăк ĕçсем çинчен сĕнӳсем тăратма кирлĕ тесе шутларĕ, çав ĕçсене туни ялхуçалăхне хăвăрт вăйлатма тата ăна пур енĕпе те аталантарма май парать.

1. Ялхуçалăхĕнче ĕçсем мĕнле тăни тата ялхуçалăх продукчĕсем нумайран та нумай тăвас задача

Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе туса хунă колхоз стройĕ кирек мĕнле уйрăм-харпăрлăхлă ялхуçалăх производствинчен те — вак таварлă производствăран та, капитализмла шултра производствăран та пур енĕпе те малта тăрать. Ялти ĕлĕкхи строй, уйрăм харпăрлăхлă сапаланчăк 25 миллион вак хуçалăх пулнă строй вырăнне тĕнчери чи шултра, социализмла çĕрĕç стройĕ туса, ăна çирĕплетнĕ. Пирĕн çĕршывра ялхуçалăхĕн социализмла системине халĕ 94 пин колхоз, 8.950 машина-трактор станцийĕ тата 4.700 ытла совхоз кĕрет.

Пирĕн çĕршыв ялхуçалăхĕ тĕнчери чи лайăх механизациленĕ ялхуçалăхĕ пулса тăрать. Пуриншĕн те çакă паллă, капитализмла çĕршывсенче ялхуçалăхĕн кучухнехи техники капиталистла фермерсен йышлă мар ушкăнĕн аллинче тăрать, мĕнпур ĕçхресченĕсен хуçалăхĕсенче тенĕ пекех алăпа ĕçлеççĕ, техника та питĕ кивĕ.

Совет государстви ялхуçалăхне машина-трактор станцийĕсен чи лайăх индустриллĕ техникипе хĕçпăшаллантарчĕ, çакă вара ялхуçалăхĕнчи чи кирлĕ те пысăк ĕçсене механизацилес ыйтăва татса пама май пачĕ. 1952 çулта колхозсенче ĕçсене çакăн чухлĕ механизациленĕ: тĕштырăсем акас ĕçе — 87 проц., тĕштырăсене комбайнпа пухса кĕртессине — 70 проц., çĕртме тăвас ĕçе — 96 проц., кĕрхи суха тăвас ĕçе — 97 проц., çĕр мамăкĕ акас ĕçе — 98 проц., сахăр кăшманĕ акас ĕçе — 95 процент. Ялхуçалăх производствине механизацилени колхоз хресченĕсен ĕçне нумай çăмăллатать, пирĕн обществăна ĕçпе вăя çав тери нумай перекетлеме май парать. Вăл пирĕн çĕршыв ялхуçалăхне кучухнехи наукăпа агрономи никĕсĕ çине куçарма май пачĕ.

Колхозсен кучухнехи техникăпа хĕçпăшалланнă обществăлла хуçалăхĕ аталанса, çирĕпленсе пырать. Колхозсемпе совхозсен никĕсĕ çинче социализмла ялхуçалăхĕ паракан продуктсен хисепĕ, ялхуçалăхĕн таварлăхĕ ӳссе пырать. Сăмахран, 1926/27 çултан пуçласа 1952/53 çула çити ялхуçалăхĕн таварлă продукцийĕ çакăн чухлĕ ӳснĕ: тĕштырă енĕпе — 10,3 миллион тоннăран пуçласа 40,4 миллион тонна таран, çĕрулми енĕпе — 3 миллион тоннăран пуçласа 12,5 миллион тонна таран, аш-какай енĕпе (чĕрĕ виçепе) — 2,4 миллион тоннăран пуçласа 5 миллион таран, сĕт енĕпе — 4,3 миллион тоннăран пуçласа 13,2 миллион тонна таран. Çĕр мамăкĕ, сахăр кăшманĕ тата хăшпĕр ытти техникăлла культурăсем туса илес тĕлĕшпе те пысăк çитĕнӳсем тунă. Ялхуçалăхĕ паракан продуктсен хисепĕ ӳсни социализмла государствăна промышленноçа чĕртавар парса тăмашкăн тата халăх апат-çимĕç ытларах та ытларах ыйтнине тивĕçтермешкĕн ялхуçалăх продукцийĕн таварлă фончĕсене çултан-çул ӳстерсе пыма май парать.

Колхозсен обществăлла хуçалăхне çирĕплетсе, малалла аталантарса пынă май вĕсен пуянлăхĕ нумайланать, колхозниксем укçан тата натурăпа илекен тупăшсем ӳсеççĕ. Çакна калани те çителĕклĕ: 1940 çултан пуçласа 1952 çула çити колхозсен пайланман фончĕсем икĕ хут ӳснĕ. Хальхи вăхăтра колхозниксен реальнăй тупăшĕсем революциччен ĕçхресченĕсем илсе тăнă тупăшсенчен темиçе хут пысăкрах. Ялта çав тери пысăк улшăнусем тунă культурăллă революци пулса иртрĕ.

Çаксем пурте ĕнтĕ колхоз стройĕ вуншар миллион хресченсен производствăпа йăла никĕсĕсене тĕпренех çĕнĕлле, социализмла урăхлатнине уççăн кăтартса параççĕ. Колхоз стройĕ совет ялĕнчи мĕнпур ĕçченсене пуян та культурăллă пурнăç тума аслă çул уçса пачĕ. Рабочи класпа колхоз хресченĕсен союзĕ никам аркатайми вăй пулса тăчĕ.

Анчах тӳрех калас пулать, социализмла шултра ялхуçалăх производствин шалти питех те пысăк резервĕсемпе эпир начар усă куратпăр. Пирĕн кая юлнă тата япăхса кайнă колхозсемпе районсем те сахал мар-ха. Нумай колхозсемпе районсенче ялхуçалăх культурисен тухăçлăхĕ çаплах пĕчĕккĕ-ха. Ялхуçалăх производствинчен илекен продуктсен хисепĕ, уйрăмах вылъăх-чĕрлĕхрен, вылъăх апачĕ тума акакан культурăсенчен, çĕрулми хуçалăхĕнчен, пахча çимĕçрен илекен продуктсен хисепĕ питĕ ерипен ӳсет. Пĕр енчен, пирĕн социализмла шултра индустри, хула халăхĕ, ĕçсынни массисен материальнăй пурнăç ырлăхĕ хăвăрт ӳссе пыраççĕ, тепĕр енчен, ялхуçалăх производствин хальхи шайĕ çав ӳсĕмсен хăвăртлăхĕпе килĕшсе тăми пулчĕ.

Çакна кăтартса пама темиçе факт илме пулать. 1913 çултан пуçласа 1952 çула çити ССР Союзĕнчи шултра промышленноçăн пĕтĕм продукцийĕ (танлаштармалли хаксемпе) 27 хут ӳснĕ, вăл шутра производство хатĕрĕсем туса кăларасси — 47 хут ӳснĕ. Социализмла индустри аталаннă май хула халăхĕ хăвăрт ӳссе пырать, унăн хисепĕ 1926 çултан пуçласа 1952 çула çити 3 хут ытла ӳснĕ. Социализмла общество пуянлăхĕ нумайланнă май ĕçсыннисен материальнăй пурнăç ырлăхĕ те пĕрмаях лайăхланса пырать. Хальхи вăхăтра ССР Союзĕнчи рабочисемпе служащисен реальнăй ĕç укçи революцичченхи шайран темиçе хут пысăкрах. Çакă ĕнтĕ пирĕн çĕршыв çултан-çул пуянланса, ĕçсыннисен пурнăç тулăхĕ ӳссе пынине пĕлтерет тата çавăнпа пĕрлех, паллах ĕнтĕ, ялхуçалăхĕ умне пысăкрах та пысăкрах требованисем тухса тăраççĕ.

Çав вăхăтрах социализмла ялхуçалăх аталанăвĕн хăвăртлăхĕсем промышленность аталанăвĕн хăвăртлăхĕсенчен, халăх куллен кирлĕ япаласем ытларах ыйтнинчен уççăнах юлса пыраççĕ. Çакна калани те çителĕклĕ: 1940 çултан пуçласа 1952 çула çити промышленность продукцийĕ 2,3 хут ӳснĕ пулсан, ялхуçалăхĕн пĕтĕм продукцийĕ (танлаштармалли хаксемпе) пĕтĕмпе те 10 процент çеç ӳснĕ.

Тĕштырă культурисем енĕпе эпир, пĕтĕмĕшпе илсен, çĕршывăн ыйтăвĕсене тивĕçтеретпĕр, пирĕн çĕршывăн тырă çителĕклĕ, пирĕн государствăн кирлĕ чухлĕ резервсем пур, эпир пĕр-пĕр виçе таран урăх çĕршывсене тырă сутатпăр. Ĕçсыннисен пурнăçĕ лайăхланса пынă май халăх çăкăртан ытларах аш-какайпа сĕт продукчĕсем, пахча çимĕçсем, улма-çырла ыйтать т. ыт. те. Юлашки çулсенче ялхуçалăхĕн шăнах çак отраслĕсенче ĕнтĕ халăхăн хăвăрт ӳссе пыракан ыйтăвĕсемпе производство шайĕ уççăнах килĕшсе тăми пулчĕ. Ялхуçалăхĕн чи кирлĕ чылай отраслĕсем юлса пыни çăмăл промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçне малалла аталантарма чарса тăрать тата колхозсемпе колхозниксен тупăшĕсене ӳстерме те чăрмантарать.

Пĕтĕм ялхуçалăх производстви çителĕклĕ шайра тăманни тата ялхуçалăхĕн чи кирлĕ отраслĕсем чылайăшĕ юлса пыни мĕнрен килет-ха?

Халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсене те ăнăçлăн аталантарма кирлĕ условисем пулса тăракан йывăр индустрие пур майсемпе те вăйлатас çула Коммунистсен партийĕ çирĕп тытса пычĕ, çак çулпа пырса вăл пысăк çитĕнӳсем турĕ. Пуринчен ытла халăх хуçалăхĕн çак чи кирлĕ задачине татса пама тăрăшнă, тĕп вăйсемпе укçа-тенкĕ çакăнта кайнă. Çĕршыва индустриализацилес ĕçре пирĕн чи лайăх кадрсем ĕçленĕ. Пирĕн йывăр индустрие те, ялхуçалăхне те, çăмăл промышленноçа та пĕр вăхăтрах пысăк хăвăртлăхсемпе аталантарма май пулмзи. Çакна тума малтанлăха кирлĕ условисем хатĕрлемелле пулнă. Халĕ çав условисене туса хатĕрленĕ. Пирĕн хăватлă индустри никĕсĕ, ӳссе çирĕпленнĕ колхозсем, хуçалăх строительствин пур отраслĕсенче те вĕрентсе ӳстернĕ кадрсем пур ĕнтĕ.

Анчах ялхуçалăхĕн паха отраслĕсем чылайăшĕ юлса пынин ытти сăлтавĕсем те пур, вăл сăлтавсем пирĕн ĕçри çитменлĕхсенчен, ялхуçалăхне ертсе пырас ĕçри çитменлĕхсенчен, урăхла каласан, пирĕнтен хамăртан килеççĕ.

Чи малтан, çак сăлтавсенчен пĕри вăл, ялхуçалăхĕн чылай отраслĕсенче пурлăх енĕпе хавхалантарас принципа пăсни пулать. Предприятие тата кашни уйрăм работнике ĕçлесе тунă результатсене кура пурлăх енĕпе хавхалантарас принцип социализмла хуçалăха тытса пымалли тĕп принципсенчен пĕри пулать. В. И. Ленин çапла кăтартса панă: коммунизма куçма нумай вăхăт кирлĕ пулать, çак куçса пымалли тапхăрта хуçалăха «тӳрех хастарлăхпа мар, аслă революци çуратнă хастарлăх пулăшнипе, харпăр хăй интересĕпе, харпăр хăй тума тăрăшнипе, хуçалăх расчечĕпе...» йĕркелесе пымалла. Унсăрăн, тенĕ малалла В. И. Ленин, «эсир коммунизм патне çитейместĕр, унсăрăн эсир вуншар та вуншар миллион çынсене коммунизм патне илсе пыраймастăр»*).

Анчах фактсем çакна кăтартса параççĕ: работниксене пурлăх тĕлĕшпе хавхалантарас, пурлăх тĕлĕшпе вĕсен хастарлăхне çĕклес принципа ялхуçалăхĕн чи кирлĕ чылай отраслĕсенче усă курмаççĕ.

Ку чи малтан вылъăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе тивет. Шутласа пăхни çакна кăтартса парать: колхозсем государствăна çĕр мамăкĕ парса-сутса çак культурăна туса илме расходланă кашни ĕçкунĕ пуçне Вăтам Азири республикисенче 17—36 тенкĕ таран илеççĕ, Украина ССР-че сахăр кăшманĕ парса-сутса 12 тенкĕ, пĕтĕм ССР Союзĕпе техникăлла культурăсем парса-сутса — 18 тенкĕ яхăн илеççĕ. Ĕçе лайăх механизациленĕ районсенче, сăмахран, Сурсĕр Кавказра, колхозсем тĕштырă культурисем туса илме расходланă кашни ĕçкунĕ пуçне 8—14 тенкĕ илеççĕ. Çав вăхăтрах вылъăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре расходланă кашни ĕçкунĕ пуçне продукци парса-сутса ССР Союзĕнче вăтам шутпа 5 тенкĕ кăна, Украина ССР-ĕнче — 4 тенкĕрен кăшт ытларах кăна илеççĕ. Çапла вара, вылъăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç, ялхуçалăхĕн ытти отраслĕсемпе танлаштарсан, экономика тĕлĕшпе начартарах вырăнта тăрать.

Вылъăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пуринчен ытла алăпа ĕçленине пула производствăра расход нумай тухать. Çав вăхăтрах фактсем çакна кăтартса параççĕ: вылъăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлемелли тата сутăн илмелли хальхи хаксем колхозсемпе колхозниксене вылъăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе аталантарма пурлăх тĕлĕшпе çителĕклĕ хавхалантармаççĕ, вылъăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç хальхи пек пулса пыни колхозсемпе колхозниксене çителĕклĕ тупăш памасть. Пахча çимĕçсемпе çĕрулми туса илес тĕлĕшпе те çавнах калама пулать.

Малалла. Нумай колхозсенче ялхуçалăх артелĕн Уставĕн паллă положенийĕсене пăснă. Сталин юлташ çапла кăтартса панă: хуçалăхăн артель формиче обществăлла интересĕсемпе колхозниксен харпăр хăй интересĕсене тĕрĕс сыхăнтарас, харпăр хăй интересĕсене обществăлла интересне пăхăнтарас принцип тĕп вырăнта тăрать, тенĕ. Çак ертсе пыракан принципа шута илсе, ялхуçалăх артелĕн Уставĕнче çапла кăтартса панă: колхозра тĕп вырăнта тăракан тата ĕçе татса паракан обществăлла хуçалăхпа пĕрлех кашни колхозник килне пысăк мар хуçалăх тытма право параççĕ. Колхозăн обществăлла хуçалăхĕ çителĕклĕ аталанса çитмен чухне, вăл колхозăн обществăлла ыйтăвĕсене те, колхозниксен харпăр хăй ыйтăвĕсене те пĕтĕмпех тивĕçтерме пултарайман чухне çавăн пек хушма хуçалăх кирлĕ ĕнтĕ.

Нумай колхозсенче артель хуçалăхĕн çак чи кирлĕ принципне пăснă. Çакă вара колхозниксен харпăр хăй хуçалăхĕнчи ĕнесен, сурăхсен, сыснасен йышĕ чакасси патне илсе пымасăр тăма пултарайман, чăнах та çавăн патне илсе пынă та.

Колхозсемпе колхозниксене пурлăх тĕлĕшпе хавхалантарас принципа пăсни хальхи условисенче уйрăмах сиенлĕ пуçларĕ. Пирĕн промышленность çав тери пысăк хăвăртлăхсемпе ӳсет. Унта ĕç вăйĕ çитмест. Ĕçсĕрлĕх çинчен эпир тахçанах маннă ĕнтĕ. Предприятисенче рабочисен ĕç укçи çултан-çул ӳсет тата пурнăç условийĕсем лайăхланса пыраççĕ. Çакăн пек чухне, обществăлла хуçалăхра ĕçлени колхозникне ĕçкунĕ тăрăх çителĕклĕ тупăш памасть пулсан, çитменнине тата хăйĕн хушма хуçалăхĕнче те унăн харпăр хăй интересĕсене чакараççĕ пулсан, колхозник вăрз çăмăллăнах урăх çĕрте ĕçлеме вырăн тупать — вăл хулана, производствăна каять. Çакăнта пулать те ĕнтĕ колхозниксен харпăр хăй хуçалăхĕ чакнин тата кая юлнă колхозсенчен ял халăхĕ урăх çĕре кайнин сăлтавĕ.

Ялхуçалăхĕн хăшпĕр отраслĕсем нумай кая юлнин паллăрах сăлтавĕ вăл государство машина-трактор станцийĕсене панă тата халĕ те парса тăракан хăватлă техникăпа начах çителĕксĕр усă курни пулать. Ялхуçалăхĕн чылай отраслĕсенчи тĕрлĕ ĕçсене алă вĕççĕн ытларах тăваççĕ. Тĕштырă культурисем, сахăр кăшманĕ, çĕр мамăкĕ туса илес ĕçе лайăх механизациленĕ вăхăтрах çак чи кирлĕ отраслĕсене — вылъăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе, çĕрулми, пахча çимĕçсем, йĕтĕн тата ытти культурăсем туса илес ĕçе механизацилесси юлса пырать. Нумай МТС-сенче тракторсемпе тата ытти машинăсемпе начар усă кураççĕ.

Ялхуçалăхĕнче чылай отраслĕсем нумай кая юлнин пысăк сăлтавĕ вăл колхозсене, МТС-семпе совхозсене парти, совет, ялхуçалăх органĕсем енчен çителĕксĕр ертсе пыни, уйрăмах кадрсем суйласа илес, кадрсене выраçтарса тухса воспитани парас ĕçе тата ялта партиллĕ-политикăлла ĕçе çителĕксĕр ертсе пыни пулать.

Юлашкинчен, колхозсенчен, колхоз председателĕсемпе правленийĕсенчен, колхозниксенчен хăйсенчен килекен сăлтавсем çинчен калас пулать. Нумай артельсенче ĕç дисциплини çаплах начар-ха, колхоз производствинче колхозниксем пурте мар пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Колхозниксен ĕçне пур çĕрте те мар лайăх организациленĕ. Обществăлла пурлăхшăн тăрăшманни, ăна тирпейсĕр салатни çинчен калакан фактсем те сахал мар-ха.

Социализмла ялхуçалăхне малалла вăйлатни халăх пурнăçне лайăхлатма кирлĕ. Паллă ĕнтĕ, социализм çĕнтернĕ май халăх ыйтăвĕсем пĕрмаях ӳссе пыраççĕ. Сăмахран, юлашки 28 çул хушшинче халăха куллен кирлĕ япаласем туса кăларасси 12 хута яхăн ӳсрĕ, вăл шутра халăха апат-çимĕç продукчĕсем парса тăрасси те чылай ӳсрĕ. Анчах совет халăхĕн пурнăç шайĕ, совет çыннисен тавар туянас пултарулăхĕ, вĕсен ыйтăвĕсем татах та пысăкрах хăвăртлăхсемпе ӳсеççĕ, апат-çимĕç продукчĕсем туса кăларни ĕçсыннисен ӳссе пыракан ыйтăвĕсене нумай тивĕçтерсе çитереймест. Çавăнпа та халăха апат-çимĕç парса тăрас ĕçе лайăхлатас задача уйрăмах пысăк вырăнта тăрать.

Хамăр умма çакăн пек задача лартас пулать: наука кăтартса панă тăрăх çынна пур енĕпе те йĕркеллĕ аталанса сывă çитĕнме кирлĕ апат нормисене шута илсе, халăха апат-çимĕç продукчĕсем парса тăрассине çав нормăсен шайне çитермелле. Çакна май халăха апат-çимĕç парса тăрас ĕçе пуринчен ытла вылъăх-чĕрлĕхпе пахча çимĕç продукчĕсем ытларах туса илнĕ шутпа лайăхлатас задача пысăк вырăнта тăрать.

Халăх ыйтнă чухлĕ сĕт тата сĕт продукчĕсем парса тăрас тесен, çĕршыври мĕнпур сухалакан çĕрсен, çарансен, кĕтӳ çӳретмелли вырăнсен кашни 100 гектарĕ пуçне 260 центнер сĕт илмелле. 260 центнер сĕт илес тесен, сухалакан çĕрсен, çарансен, кĕтӳ çӳретмелли вырăнсен кашни 100 гектарĕ пуçне çулталăкра вăтам шутпа 2.500—2.600 килограмшар сĕт паракан 10 ĕне усрамалла.

Халăха кирлĕ аш-какайпа аш-какай продукчĕсем çителĕклĕ парса тăрас тесен, мĕнпур сухалакан çĕрсен, çарансен, кĕтӳ çӳретмелли вырăнсен кашни 100 гектарĕ пуçне 27 центнер аш-какай туса илмелле. Çакна тума сысна ĕрчетес ĕçе вăйлăн аталантарса, сухалакан çĕрсен кашни 100 гектарĕ пуçне 30 центнертан кая мар сысна ашĕ туса илмелле.

Сухалакан çĕрсен кашни 100 гектарĕ пуçне çулталăкра 110-шар çăмартаран кая мар тăвакан 340 чăх усрамалла.

Сахăр, пахча çимĕçсемпе бахча культурисем, йывăç çимĕçĕсем, улма-çырласем тата ытти продуктсем туса илессине те нумай ӳстермелле.

Апат-çимĕç продукчĕсем туса илес ĕçе пирĕн çав шая хăвăртрах çитермелле. Çав шая хăçан çитесси пиртен, эпир ертсе пынинчен, парти организацийĕсен организацилле ĕçĕнчен нумай килет. Эпир хамăрăн мĕнпур пултарулăха, мĕнпур майсене, мĕнпур вăя çак задачăна татса пама хурсан тата ертсе пырас ĕçре пĕтĕмĕшле директивăсем панипе çырлахмасăр, кашни колхоза, кашни совхоза, кашни МТС-а çирĕплетсе пыма тытăнсан, халăха апат-çимĕç продукчĕсем парса тăрас тĕлĕшпе эпир çак шая кĕске срокрах, чылай продуктсем тăрăх 2—3 çултах çитĕпĕр.

Хамăр çĕршывра апат-çимĕç пĕтĕмĕшпех çителĕклĕ тăвас тесе халех ĕнтĕ пысăк çитĕнӳсем тăвакан колхозсем пирĕн сахал мар. Çав колхозсенчен нумайăшĕ кая юлса пынă çĕртен икĕ-виçĕ çул хушшинче малта пыракансен ретне тухнă. Сăмахран, Мускав облаçĕнчи Раменское районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоза илер. Виçĕ çул каярах çак колхозпа темиçе пĕчĕк артель пĕрлешнĕ, вĕсем Молотов ячĕпе тăракан колхозран чылай юлса пынă. Колхоз производствин чаплă организаторĕ Пузанчиков юлташ ертсе пыракан правлени колхоз ĕçне пĕлсе туса пынине пула иртнĕ виçĕ çул хушшинче пĕтĕм колхоз, вăл шутра унпа пĕрлешнĕ пĕчĕк артельсем те, халиччен юлса пынăскерсем, нумай малалла кайнă, пур енĕпе те аталаннă, пысăк тупăш паракан хуçалăх пулса тăнă. Пĕр ĕнерен сĕт суса илесси вăтам шутпа 2.500 килограмран 4.208 килограма çити ӳснĕ. Пур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхĕ те ӳснĕ, вăл шутра çĕрулми гектартан — 162 центнер таран, пахча çимĕçсем — 294 центнер таран туса илнĕ. Вылъăх-чĕрлĕх йышĕ ӳснĕ, колхоз вылъăх-чĕрлĕхрен чылай ытларах продуктсем илсе тăма пуçланă.

Вылъăх-чĕрлĕхрен продуктсем нумай илни тата пур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне те ӳстерни Молотов ячĕпе тăракан колхоза укçа-тенкĕ тупăшĕсене 3 миллион тенкĕ çитерме май панă. Колхоз иртнĕ çул вылъăх-чĕрлĕх валли çурт-йĕр тума кăна 612 пин тенкĕ расходланă. Колхозниксене кашни ĕçкунĕ пуçне укçан 25 тенкĕ те 80 пус валеçнĕ.

Халăха вылъăх-чĕрлĕх продукчĕсем çителĕклĕ парса тăма кирлĕ çулте кăтартнă нормăсене Молотов ячĕпе тăракан колхоз тунă çитĕнӳсен кăтартăвĕсемпе танлаштарса пăхсан, çакна курма пулать:

	Наука кăтартса панă нормăсем тăрăх çĕршыври халăха апат-çимĕç парса тăма çакăн чухлĕ кирлĕ	Молотов ячĕпе тăракан колхозра 1952 çулта çакăн чухлĕ пулнă
Акакан çĕрсен, çарансен, кĕтӳ çӳретмелли вырăнсен 100 гектарĕ пуçне:		
Майракаллă шултра вылъăх	20	35
вăл шутра ĕнесем	10	19
аш-какай (чĕрĕ виçи — центнерпа)	27	31
суса илнĕ сĕт — центнерпа	260	710
вăтам шутпа пĕр ĕнерен сĕт суса илесси — килогрампа	2.500—2.600	4.208

Молотов ячĕпе тăракан колхозăн çакăнта асăннă пур кăтартăвĕсем те пирĕн пĕтĕм çĕршывĕпе çитме кирлĕ нормăсенчен иртсе кайнă. Кунта çакна астăвас пулать. Молотов ячĕпе тăракан колхозăн кăтартăвĕсене обществăлла вылъăх-чĕрлĕхе кăна кĕртнĕ, урăхла каласан, колхозниксен хăйсен харпăрлăхĕ пулса тăракан вылъăх-чĕрлĕхе ку шута кĕртмен.

Пирĕн çĕршыври колхозсем пурте Молотов ячĕпе тăракан колхоз тунă çитĕнӳсен шайне çитес пулсан, — çав задачăна татса пама кирек хăш колхозăн та вăй çителĕклĕ, — вара ялхуçалăх продукчĕсем нумайран та нумай туса илес ыйтăва татса панă пулăттăмăр.

Социализмла ялхуçалăхĕн совет халăхне апат-çимĕç продукчĕсем, промышленноçа — чĕртавар çителĕклĕ парса тăрас задачăна кĕске срокрах татса пама пур майсем те пур. Анчах çав майсене чăннипех пурнăçа кĕртме пур колхозсене те организаципе хуçалăх енчен çирĕплетмелле тата, чи малтан, кашни колхозра ертсе пыракан вырăнсене ĕçе тĕплĕн пĕлекен организаторсене, социализмла шултра хуçалăха ăнăçлă ертсе пыма пултаракан çынсене уйăрса лартмалла.

Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерес тата вылъăх-чĕрлĕх ĕрчетессине аталантарас ĕçре колхозсемпе колхозниксене пурлăх тĕлĕшпе ытларах хавхалантарни пысăк вырăн йышăнать. Çак шутпа СССР Министрĕсен Совечĕпе партин Центральнăй Комитечĕн Президиумĕ вылъăх-чĕрлĕх продукчĕсем, çĕрулми, пахча çимĕçсем хатĕрлемелли тата сутăн илмелли хальхи хаксене ӳстерме кирлĕ тесе йышăнчĕç. Сăмахран, государствăна обязательнăй йĕркепе паракан вылъăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕкĕн хатĕрлев хаксем 5,5 хут ытла ӳсеççĕ, сĕтпе çу хакĕсем — 2 хут, çĕрулми хакĕ — 2,5 хут, пахча çимĕç хакĕсем — вăтам шутпа — 25—40 процент ӳсеççĕ. Сутăн илмелли хаксене илес пулсан, аш-какай хакĕ вăтам шутпа 30 процент, сĕт хакĕ 1,5 хут ӳсет. Кунта çакна уйрăмах палăртни кирлĕ: вылъăх-чĕрлĕх продукчĕсен, çĕрулмин, пахча çимĕçсен вакăн сутмалли хакĕсем ӳсмеççĕ, пачах урăхла, çултан-çул йӳнелсе пыраççĕ. Куллен кирлĕ япаласен вакăн сутмалли хакĕсене йӳнетмелли çул-йĕре малашне те çирĕппĕн тытса пырăпăр.

Çавнашкалах хальхи условисенче колхозниксем государствăна обязательнăй йĕркепе вылъăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли нормăна чакарни тата колхозсем çĕрулмипе пахча çимĕçсем памалли нормăна чакарни усăллă пулать тесе йышăннă. Рабочисемпе служащисен хуçалăхĕсем обязательнăй йĕркепе вылъăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли нормăсем те чылай чакаççĕ.

Обязательнăй йĕркепе памалли нормăсене чакарнине пула государствăн пысăкрах хакăпе сутма тата колхоз пасарĕнчи хакпа сутма колхозсемпе колхозниксен продукци нумайрах юлать. Çавна май государствăна кооперации организацийĕсем урлă продукци сутăн илмелли хальхи йĕркене çĕнĕрен пăхса тухни кирлĕ. Хальхи сутăн илес йĕркерен контрактаци тăвас йĕркене куçмалла, контрактаци туни государствăна, обязательнăй йĕркепе панисĕр пуçне, мĕн чухлĕ продукци илессине малтанах планласа хума май парать, колхозсемпе колхозниксене вара продукци сутма гаранти парать, укçан аванс илме, хăйĕн сутас продукцийĕн шучĕпе хăйсене кирлĕ промышленность таварĕсем туянма май парать.

(Малалли 2-мĕш страницăра).

*) В. И. Ленин. Соч., 32 т., 434 стр.

*) В. И. Ленин. Соч., 33 т., 36 стр.

Н. С. ХРУЩЕВ юлташ доклачĕ

(Малалли).

Совет государстви ялхуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе халех тумалли ĕçсене пурнăçа кĕртме 1953 çулта çĕнĕрен хушса 15 миллиард тенкĕ ытла, 1954 çулта—35 миллиард тенкĕ ытла расход кăларать. Çав расходсен чылай пысăк пайне ялхуçалăхĕнче çĕнĕрен капитальнăй ĕçсем тунă çĕре хывма тата колхозсемпе колхозниксене выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе, çĕрулмипе пахча çимĕç туса илес ĕçе аталантарма пурлăх тĕлĕшпе ытларах хавхалантарас тесе, çапла вара ялхуçалăхĕн çак отраслĕсене çитес çывăх çулсенчех нумай малалла аталантарас тесе пама палăртнă. Çакăнта кăтартнă ĕçсене пурнăçа кĕртнипе колхозсемпе колхозниксем 1953 çулта малтан палăртнинчен 13 миллиард тенкĕ ытларах, 1954 çулта—20 миллиард тенкĕ ытларах тупăш илеççĕ.

Продуктсем хатĕрлемелли тата сутăн илмелли хаксене ÿстерни тата обязательнăй йĕркепе памалли нормăсене чакарни колхозсемпе колхозниксене ялхуçалăхне малалла аталантарма пурлăх тĕлĕшпе ытларах хавхалантарас енчен пысăк вырăн йышăнаççĕ. Анчах çак ĕçсене экономика енчен тĕрĕс хак парас пулать. Вĕсем хальхи вăхăтра паха та кирлĕ пулни усăмлăнах курăнса тăрать. Анчах колхоз производствине аталантармалли тĕп çул-йĕре вĕсем палăртса памаççĕ-ха.

Социализмла общество экономикин тĕп уйрăмлăхĕ вăл хаксене йĕрмаях йÿнетсе пыни пулса тăрать, хаксем йÿнелесси производство лайăхланса пынă никĕс çинче, ĕç тухăçлăхĕ ÿссе пынă тата продукци ытларах туса кăларнă никĕс çинче пулса пырать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç, çĕрулмипе пахча çимĕçсем туса илес ĕç юлса пынине пĕтермелли, ялхуçалăхĕн пур отраслĕсене те малалла хăватлăн аталантармалли тĕп çул-йĕр вăл колхоз производствин шайне ÿстерни, пĕтĕм продукципе таварлă продукцие ÿстерни, туса кăларакан продукт единици пуçне тухакан расходсене чакарни пулса тăрать. Вара продуктсем хатĕрлемелли тата сутăн илмелли хальхи хаксемпе колхоз производствин пур отраслĕсем те пысăк тупăш парса тăракан пулĕç.

Малта пыракан çĕршер те пиншер колхозсем халех ĕнтĕ продуктсем хатĕрлемелли тата сутăн илмелли халиччен пулнă хаксемпе государствăна аш-какай, сĕт, çăм, çĕрулми, пахча çимĕçсем обязательнăй йĕркепе парса тата сутса пысăк тупăш илеççĕ. Ун пек колхозсем государство умĕнчи хăйсен обязательствисене ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ кăна мар, палăртнă обществăлла фондсене те çултан-çул ÿстереççĕ, ĕçкунĕсем тăрăх та тупăш ытларах параççĕ. Çапла ĕнтĕ, ĕç продуктсем хатĕрлемелли тата сутăн илмелли хаксене ÿстернинчен кăна мар, пуринчен ытла, хуçалăх аталанăвĕн шайĕнчен килет.

Çакна кăтартса пама конкретлă колхозсене илсен, аванрах. Кострома облаçĕнчи Кострома районĕнчи «12 Октябрь» колхозпа Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе тăракан колхоз çĕрпе климат тĕлĕшĕнчен пĕр пек условисенчех вырнаçнă темелле, анчах вĕсен ĕç результачĕсем пачах урăхла. Ана çак цифрăсенчен курма пулать:

«12 Октябрь» колхозпа Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе тăракан колхоза 1952 çулшăн экономика тĕлĕшпе танлаштарса пăхни:

	«12 Октябрь» колхоз	Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе тăракан колхоз
Акакан çĕрсен, çарансен, кĕтÿ çÿретмелли вырăнсен лаптăкĕ (гектарпа)	998	904
Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхĕ (гектар пуçне—центнерпа):		
Мĕнпур тĕштырăсем	18,5	7,1
Çĕрулми	195	70
Пахча çимĕçсем	164	86
Ĕне пуçне сунă сĕт (килогрампа)	5.233	1.272
Обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышĕ (акакан 100 гектар çĕр, çаран, кĕтÿ çÿретмелли вырăн пуçне):		
Майракаллă шултра выльăх	26	13
вăл шутра ĕнесем	10	6
сыснасем (акакан 100 гектар çĕр пуçне)	142	8
кайăк-кĕшĕк (акакан 100 гектар çĕр пуçне)	240	15
Выльăх-чĕрлĕхрен илнĕ продуктсем (100 гектар акакан çĕрсем, çарансем, кĕтÿ çÿретмелли вырăнсем пуçне):		
аш-какай чĕрĕ виçепе (центнерпа)	13	5
сĕт (центнерпа)	509	85
Колхозсен укçа-тенкĕ тупăшĕсем	2 млн. 109 пин тенкĕ	151 пин тенкĕ.
1 гектар акакан çĕр, çаран, кĕтÿ çÿретмелли вырăн пуçне	2.113 тенкĕ	167 тенкĕ.

«12 Октябрь» колхоз тунă çитĕнÿсем колхозра кадрсене тĕрĕс суйласа илсе, тĕрĕс вырнаçтарса тухнинчен килнĕ. Ку колхоза Прасковья Андреевна Малинина ертсе пырать, вăл ĕçе лайăх пĕлет, хуçалăха пĕлсе ертсе пырать. Малинина юлташăн вăйĕ—вăл тата вăл ертсе пыракан колхоз правленийĕ колхозниксем, колхоз активĕ çине таянса ĕçленинче. Кунта хуçалăха ертсе пырас, колхозниксене воспитани парас ĕçре колхозри парти организацийĕн ролĕ чăнчăнах курăнса тăрать.

Çакăн пек тĕслĕхсем нумай илсе кăтартма пулать. Çаксем пурте колхозсенче ялхуçалăхне малалла аталантарма калама çук пысăк резервсем пуррине кăтартса параççĕ.

Малалла ялхуçалăхĕн уйрăм отраслĕсенче ĕçсем мĕнле тăнине тĕплĕнрех кăтартса пама ирĕк парăр.

2. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле тăни тата ку ĕçе малалла аталантармалли мерăсем çинчен

Пирĕн умра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе пуринчен те маларах татса памалли задачăсем тăраççĕ, мĕншĕн тесен ку ĕç юлса пыни ытла та вăраха кайрĕ, татăклă мерăсем йышăнмасăр ку ĕçе эпир хăвăрт лайăхлатма пултараймастпăр.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç пирĕн вăрçăчченхи вăхăтра та юлса пынă. Вăрçă хыççăнхи вăхăтра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатса малалла аталантарас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. 1945 çулхи июль уйăхĕнчен пуçласа 1953 çулхи июль уйăхне çитиччен ССР Союзĕнче майракаллă шултра выльăхсен хисепĕ 11,3 миллион пуç, сурăхсемпе качакасен хисепĕ—53,9 миллион пуç, сыснасен хисепĕ—25,1 миллион пуç хушăннă.

Сиелтен пăхсан, ÿсĕм цифрисем çакăн пек пулнă чухне, вĕсем чăнах та пысăк ĕнтĕ, ытлашши хумханма нимĕнле сăлтав та çук пек. Чăннипе ĕçсем кун пек мар.

ССР Союзĕнче выльăхсен хисепĕ мĕн чухлĕ пулни çинчен калакан цифрăсене илсе кăтартатăп:

(танлаштарса пăхма илнĕ территорире çулталăк пуçламăшĕнче пулнă, миллионшар пуç)

	Майракаллă шултра выльăх	Вăл шутра ĕнесем	Сыснасем	Сурăхсемпе качакасем	Лашасем
1916 çул	58,4	28,8	23,0	96,3	38,2
1928 çул	66,8	33,2	27,7	114,6	36,1
1941 çул	54,5	27,8	27,5	91,6	21,0
1953 çул	56,6	24,3	28,5	109,9	15,3

Çак цифрăсем акă мĕн çинчен калаççĕ: 1953 çул пуçламăшĕ тĕлне ĕнесем 1941 çул пуçламăшĕ тĕлне пулнинчен 3,5 миллион пуç сахалтарах тата 1928 çул пуçламăшĕ тĕлне пулнинчен 8,9 миллион пуç сахалтарах пулнă.

Ялхуçалăхĕ пĕтĕмĕшпе илсен анлă воспроизводство принципĕсем тăрăх аталанса чылай малалла кайнă вăхăтрах, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç питĕ вăраххăн аталанса пынă. Обществăлла выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ çаплах пĕчĕккĕ. Уйрăм облаçсемпе республикăсенче ĕнесенчен сĕт суса илес енĕпе ĕç уйрăмах чăтма çук япăх. 1952 çулта Киров облаçĕнчи колхозсенче кашни ĕнерен 727 килограмм сĕт, Новгород облаçĕнчи колхозсенче—777 килограмм, Вологда облаçĕнче—819, Кострома облаçĕнче—906, Азербайджан ССР-ĕнче—373, Грузин ССР-ĕнче—457, Киргиз ССР-ĕнче—537, Армян ССР-ĕнче—814, Белорус ССР-ĕнче — 829 килограмм сĕт суса илнĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç юлса пынине кĕске срокра пĕтерес пулать, чи малтан, обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе хăвăрт малалла ярас пулать, ĕнесен хисепне ÿстерес тата колхозсемпе совхозсенче выльăхсен тухăçне ÿстерес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмалла.

Колхозсенче обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç вăрçă хыççăнхи çулсенче пысăк хăвăртлăхпа ÿссе пычĕ. 1953 çул пуçламăшĕ тĕлне колхозсенче майракаллă шултра выльăхсен хисепĕ 1940 çулхипе танлаштарсан 10,2 миллион пуç хушăннă, вăл шутра ĕнесен хисепĕ—2,8 миллион пуç, сурăхсемпе качакасен хисепĕ—35,3 миллион пуç, сыснасен хисепĕ—7,9 миллион пуç, çитĕннĕ кайăк-кĕшĕк хисепĕ—58 миллион штук хушăннă.

Эпир обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес çул çинче пулса тăнă пысăк йывăрлăхсене пĕтерсен,—ку йывăрлăхсене пула халех ĕнтĕ выльăхсен хисепĕ хушăнас хăвăртлăх чакрĕ,—колхозсенче выльăхсен хисепĕ тата пысăкрах хăвăртлăхпа ÿссе пыма пултарать. Сăмах акă мĕн çинчен пырать: выльăх апачĕ туса хатĕрлесси, витесем тăвасси тата выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕçри вăй нумай илекен ĕçсене механизацилесси, обществăлла выльăх-чĕрлĕх хисепĕ ÿссе пынин хăвăртлăхĕнчен юлса пырать.

Эпир çак йывăрлăхсене чи кĕске срокра пĕтерме пултаратпăр-и? Сăмах та çук, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе лайăхрах ертсе пыма тытăнсан, фермăсенче ĕçлеме лайăх кадрсем суйласа илсен, çак кадрсене тивĕçлипе воспитани парсан, обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе колхозсемпе колхозниксене экономика енĕпе хавхалантарсан, эпир çав йывăрлăхсене кĕске срокра пĕтерме пултаратпăр.

Çакна май, эпĕ чи малтан выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес практика çинче чарăнса тăрасшăн. Хальхи вăхăтра час-часах хатĕрлев ĕçĕ колхозсенчи выльăхсен хисепне кура колхозсене заданисем валеççе парасси кăна пулса тăнă, гектар тăрăх памалли принципа сĕмсĕррĕн пăснă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе аталантарнă малта пыракан колхозсем, районсем, облаçсем выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парас тĕлĕшпе çултан-çул пысăкрах заданисем илеççĕ, обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме сахал тăрăшакан колхозсем валли пĕчĕкрех, тĕрĕссипе илсен, льготăллă нормăсем туса параççĕ. Çакнашкал практика обществăлла выльăх-чĕрлĕх хисепне тата унăн тухăçне ÿстерессишĕн колхозсемпе колхозниксене экономика енĕпе хавхалантарассине хавшатать.

Акă пĕр паллă тĕслĕх. Мускав облаçĕнчи колхозсем государствăна сухаламалли кашни гектар çĕр, çаран, кĕтÿ çÿретмелли вырăншăн 39,5 литр сĕт парса тăнă, Рязань облаçĕнчи колхозсем пурĕ те 14,8 литр кăна панă. Мускав облаçĕнчи Луховицки районпа Рязань облаçĕнчи Рыбновски районăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме кирлĕ условисем пĕр пекрех. Апла пулсан та Луховицки районти колхозсем государствăна кашни гектар пуçне 57 литр сĕт тата 5,5 килограмм аш-какай параççĕ, Рыбновски районти колхозсем вара—31 литр сĕт тата 4,7 килограмм аш-какай параççĕ.

Украинăри колхозсем вăтам шутпа кашни гектар пуçне государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем, сăмахран, Белоруссири колхозсенчен чылай ытларах панине нимĕнпе те ăнлантарса пама çук. Çавăн пек, Украинăри колхозсем валли кашни гектар пуçне аш-какай 6,3-шер килограмм, сĕт—25-шер литр памалла тума палăртнă, Белоруссири колхозсен вара 3,9 килограмм тата 12,8 литр памалла. Çав вăхăтрах Белоруссире выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме, уйрăмах сыснасем ĕрчетме кирлĕ условисем лайăхрах. Белоруссири партипе совет органĕсем выльăх-чĕрлĕх хисепне тата тухăçлăхне ÿстерессишĕн тивĕçлипе кĕрешмеççĕ. 1952 çулта республикăри колхозсенче 100 гектар çĕр пуçне пĕр сыснаран та каярах самăртнă, аш-какай хатĕрлевĕнче сысна ашĕ пурĕ те 13 процент кăна пулнă.

Государствăна пама нормăсем палăртнă чухне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе пĕр пекрех условисенче ĕçлекен колхозсене çакăн пек тĕрлĕ нормăсем туса пынине мĕнпе тÿрре кăларма пулать-ха? Хатĕрлевçĕсем çакна колхозсен, районсен, облаçсен экономикăлла аталанăвĕн шайĕ çинчен каласа тÿрре кăларма пăхаççĕ. Вĕсен шучĕпе ытларах аталаннă хуçалăхăн продуктсем те ытларах памалла: эсĕ çак çулта çамрăк выльăхсем ытларах сыхласа хăвартăн пулсан, ытларах сĕт суса илтĕн пулсан, задани те ытларах ил. Колхоз хăйĕн кÿрши шайĕнчен пăртак ытларах çĕклентĕр кăна, хатĕрлевçĕсем ăна сад ăсти скверсенче йывăç тĕмисен тăррине хачăпа касса татнă пекех касса татаççĕ.

Çакнашкал тÿсме çук практикăна пĕтерес пулать. Партипе Правительство обязательнăй йĕркепе выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парас тĕлĕшпе гектар тăрăх туса панă принципа çирĕп тытса пымалла, пĕр административлă районта, пур çĕрте те пекех, гектар тăрăх памалли пĕр норма пулмалла. Çĕр пĕр пек мар чухне кăна, правилăран тухса, районти вăтам нормăна кăштах улăштарма пулать.

Колхозсемпе колхозниксем обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе интересленесси, каларăм ĕнтĕ, чылай енчен выльăх-чĕрлĕх продукчĕсен хатĕрлев хакĕсенчен килет. Хатĕрлев хакĕсене тата сутăн илмелли хаксене ÿстернипе колхозсем кăçалах ĕнтĕ государствăна сĕт тата аш-какай панипе 3,8 миллиард тенке яхăн усă кураççĕ. Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем панипе тата сутнипе илекен укçа-тенкĕ колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе илсе тăракан тупăшсен çăлкуçĕсенчен пĕри пулса тăрать.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе çителĕксĕр аталантарнă пирки колхозсенчен пĕр пайĕ обязательнăй йĕркепе выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем тăратас тĕлĕшпе парăма кĕнĕ. Партипе Правительство йышăннă решенисем тăрăх, ялхуçалăхĕн çак отрасльне хăвăртрах вăйлатма çĕнĕ майсем туса парас шутпа, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парас тĕлĕшпе колхозсен иртнĕ çулсенче пулса тăнă парăмне касармалла тунă. Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парас тĕлĕшпе иртнĕ çулсенче колхозниксен, рабочисен, служащисен хуçалăхĕсем парăма кĕнине те, вĕсене хăвăртрах ĕнесем туянма май парас тесе, касармалла тума сĕнÿ тăратнă.

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕçре кăна мар, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн ытти ыйтăвĕсенче те пысăк йăнăшсем пулнă. СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин, СССР Совхозсен министерствин руководителĕсем тата вырăнти органсен руководителĕсем нумайăшĕ чылай çулсем хушши выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçшĕн тивĕçлипе тăрăшми пулман, вĕсем ĕç çакăн пек япăх пулнипе килĕшнĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе тахçанах татса памалла пулнă ыйтусене хускатман тата татса паман.

Ĕç çакăн пек пулнине хăшпĕр тĕслĕхсемпе çирĕплетсе кăтартма ирĕк парăр мана. Колхозсемпе совхозсенче ĕнесен хисепĕ тĕлĕшĕнчен ĕç начар тăрать. СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерстви, СССР Совхозсен министерстви, вырăнти нумай совет органĕсем, майракаллă шултра выльăхсен хисепне пĕтĕмĕшпе ÿстерессишĕн хыççăн кайса, ĕнесен хисепне ÿстерессишĕн сахал тăрăшнă.

1952 çулта колхозсем ĕнесен хисепне 1,5 миллион пуç чухлĕ ÿстерме пултарнă, анчах вĕсем 500 пин пуç чухлĕ кăна ÿстернĕ. Мĕншĕн çакăн пек пулнă-ха? Мĕншĕн тесен, сыснасем тата самăртнă вăкăрсем парас вырăнне, государствăна обязательнăй поставка йĕркипе 1 миллион пуçа яхăн ĕне панă тата, куньйăр пуçне, 500 пин пуç ĕне сутнă тата пуснă. Пĕр çул хушшинче 1,5 миллион пуç ĕне расходлани колхозсем усракан пĕтĕм ĕнесен хисепĕнче 18 процент пулса тăрать. Çак сăлтав пирки Вологда облаçĕнчи колхозсен фермисенче 1952 çулта ĕнесене расхода кăларни пĕтĕм ĕнесен хисепĕнче 23 процент, Казах ССР-ĕнче—24 процент, Киров, Молотов, Владимир облаçĕсенче—26 процент пулнă.

Çĕршывра ĕнесен хисепĕ пĕтĕм майракаллă шултра выльăхсен хисепĕнче 1941 çулта 51 процент пулнă пулсан, 1953 çул пуçламăшĕ тĕлне 43 процент пулнă. Майракаллă шултра выльăхсен пĕтĕм хисепĕнче ĕнесем колхозсенче 28 процент, совхозсенче 31 процент пулнă.

Сĕт çителĕклĕ таран илсе тăрас тесен, кĕтÿре ĕнесем 50 процентран кая мар пулмалла, хуласем çывăхĕнчи районсенче—60 процентран кая мар, Казахстанри, Вăтам Азири, Кавказ леш енчи, Çурçĕр Кавказри, Астрахань, Чкалов, Чита облаçĕсенчи, Бурят-Монгол АССР-ĕнчи тата Тува автономиллĕ облаçĕнчи çесен хирлĕ, çурма пуш-хирлĕ тата сăрт-туллă районсенчи колхозсенче—40 процентран кая мар пулни кирлĕ. Белорус ССР-ĕнчи колхозсен кĕтĕвĕнче ĕнесем пурĕ те 26 процент, Украина ССР-ĕнчи, Курск тата Воронеж облаçĕсенчи колхозсен 24-шар процент, Рязань облаçĕнчи колхозсен—21 процент, Молдаван ССР-ĕнчи колхозсен—19 процент кăна пулсан, ăçтан-ха сĕт ытлăн-çитлĕн пуласси çинчен сăмах пулма пултартăр.

Сĕтлĕ выльăх нумай усракан пысăк районсенче, калăпăр, Вологда, Архангельск, Ярославль, Тамбов, Молотов, Свердловск, Курган, Омск тата Новосибирск облаçĕсенче ĕнесен хисепне чылай чакарнă. Ĕлĕкрешпех сутлăх çу тунă районсенче хальхи вăхăтра ĕлĕкхинчен сахалтарах çу туса кăларма пуçлани те ĕнесен хисепĕ çителĕксĕр ÿссе пынинчен килет. Çĕпĕрте, тĕслĕхрен, 1913 çулта 75 пин тонна çу тунă, 1952 çулта вара—65 пин тонна кăна тунă.

Ĕнесен хисепне ÿстерес тĕлĕшпе совхозсем те юлса пыраççĕ. Хальхи вăхăтра вĕсем 1 миллион та 300 пин пуç ĕне, урăхла каласан, 1935 çулта усранинчен 500 пин пуç сахалтарах усраççĕ. СССР Совхозсен министерствинчи работниксен тĕлĕнмелле «теорийĕ» тăрăх совхозсенче 200 пин ĕнене сумаççĕ, вĕсене пăрусене ĕмĕртме кăна усраççĕ, çавăн пирки çуллен 200 пин тоннăран кая мар сĕт çухатаççĕ. Партин Горно-Алтайски обкомĕн секретарĕ Сорока юлташ пĕлтернĕ тăрăх, Алтай крайĕнчи Абайски тата Коксински совхозсенче икĕ пин пуç симментальски ĕнесене тăватă çул каялла сума пăрахнă. Çав ĕнесенчен хăшĕ-пĕрисем 3.000 килограмм таран сĕт панă. Çак совхозсем государствăна 35 пин центнер сĕт парса тăнă, халĕ çав сĕте пăрусене парса, вырăнсăр нумай салатса тата çаратса пĕтереççĕ.

Постановлени проектĕнче 1954 çулта ĕнесен хисепне 29,2 миллион пуçа çитерме е 1953 çул пуçламăшĕ тĕлне пулнипе танлаштарсан 4,9 миллион пуç чухлĕ ÿстерме палăртнă, вăл шутра — колхозсенче 11,5 миллион пуçа çитерме е 1953 çул пуçламăшĕ тĕлне пулнипе танлаштарсан 3 миллион пуç чухлĕ ÿстерме палăртнă. Тата çапла тума сĕнÿ пур: ĕнесен хисепне ÿстермелли плана тултарсан кăна майракаллă шултра выльăх ĕрчетмелли плана тултарнă, тесе шутламалла.

Пурте пĕлеççĕ, мĕнпур йышши выльăхсем усрамалли плансем тăвас тата плана тултарнине шута илес ĕçсене кашни çул январĕн 1-мĕшĕ тĕлне туса ирттернĕ. Пурнăç çакнашкал йĕрке сиен кÿнисĕр пуçне урăх нимĕн те паманнине кăтартса пачĕ. Колхозсен, выльăх-чĕрлĕх хисепĕ енĕпе плана тултарас шутпа, государствăна пама, сутма, аш-какай тума палăртса хунă продуктивлă мар, бракланă выльăхсене ирĕксĕрех январĕн 1-мĕшĕччен усрама, колхозниксенчен пăрусем илме, сысна амисене кĕркунне çăвăрлаттарма, «автан» фермисем тытма тивнĕ.

Январĕн 1-мĕшĕнче перепись ирттернĕ хыççăн часах колхозсем выльăхсен шутне чакарнă. Сăмахран, çĕршывра пĕтĕм колхозсем 1951 çулхи декабрь уйăхĕнче государствăна 232 пин пуç майракаллă шултра выльăх панă, 1952 çулхи январь уйăхĕнче—889 пин пуç. Украина ССР-ĕнчи колхозсем 1951 çулхи декабрь уйăхĕнче 16,7 пин пуç, 1952 çулхи январь уйăхĕнче—219 пин пуç, урăхла каласан, 13 хут нумайрах панă. СССР Центральнăй Статистика Управленийĕ шутласа пăхнă тăрăх, аш-какай памалли плана тултарма 1952 çулхи 1-мĕш кварталта колхозсем майракаллă шултра выльăхсем пама кирлинчен 200 пин пуç ытларах панă, мĕншĕн тесен панă выльăхсем, хĕллехи вăхăтра апат çитмен пирки тата начар тăрантарнă пирки ырхан пулнă. Çакă вăл колхозсене те, государствăна та пысăк сиен кÿнĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре хуçалăх çулĕ октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçленет. Çак вăхăт тĕлне выльăх апачĕ хатĕрлес, витесене юсаса хĕле хатĕрлес ĕçсем вĕçленеççĕ, выльăхсем самăрăлса çитеççĕ, ку вăл колхозсене государствăна аш-какай памалли плана çуллахи вăхăтра самăрăлса çитнĕ, йывăр таякан выльăхсем панипе, сахалтарах выльăх панипе тултарма май парать. Октябрь уйăхĕ пуçланнă тĕле колхозсенче выльăхсем хуçалăхра мĕн тума юрăхлине палăртас ĕç (ăратлăх хăварасси, бракласси тата ытти те) вĕçленет. Çавăнпа та хуçалăх çулĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçланмалла тăвас пулать.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе пулакан чи пысăк çитменлĕхсенчен пĕри ама выльăхсем ытла та нумай хĕсĕр юлни тата выльăхсем, уйрăмах çамрăк выльăхсем, нумай вилсе пĕтни пулать. Иртнĕ çулта колхозсем кашни 100 ама выльăх пуçне 1940 çулхинчен—пăрусем 11 пуç сахалтарах, путексем 27 пуç сахалтарах, сысна çурисем 163 пуç сахалтарах илнĕ. Юлашки икĕ çул хушшинче Новгород, Кострома, Курган облаçĕсенчи тата Алтай крайĕнчи колхозсенче выльăхсем вилнипе кашни виçĕ пăруран пĕрне, Вологда тата Иваново облаçĕсенчи колхозсенче—1952 çулта кашни икĕ путекран пĕрне, Воронеж, Тамбов, Ростов облаçĕсенчи колхозсенче кашни пилĕк путекрен пĕрне, Белорус ССР-ĕнче кашни тăватă сысна çуринчен пĕрне çухатнă.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе ытла та çителĕксĕр ертсе пынине кăтартакан ытти тĕслĕхсем те сахал мар илсе кăтартма пулать. Анчах ĕç тĕслĕхсем нумай пулнинче мар. Çакă паллă: выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç хальхин пек япăх тăнине пĕтерес тесен, ытти ĕçсем туса ирттернипе пĕрлех, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе ертсе пырассине татăклăн лайăхлатмалла.

Постановлени проектĕнче 1954 çулта мĕнпур продуктивлă выльăхсен хисепне чылай ÿстерме, çавăн пекех тата сĕт суса илессине, çăм касса илессине, выльăхсене лайăх апат çитерсе самăртассине ÿстерме палăртнă.

Выльăхсен хисепне тата вĕсен тухăçне ÿстерме палăртнă май çитес çул аш-какай пĕтĕмпе 4,1 миллион тонна таран хатĕрлеме (1952 çулта 3 миллион тонна хатĕрленĕ), сĕт—14,3 миллион тонна таран (1952 çулта 10 миллион тонна хатĕрленĕ), çăмарта—4,3 миллиард штук таран (1952 çулта 2,6 миллиард штук хатĕрленĕ), çăм—230 пин тонна таран (1952 çулта 182 пин тонна хатĕрленĕ) хатĕрлеме палăртнă. Эпĕ каларăм ĕнтĕ, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене çĕнĕ, пысăкрах хакпа хатĕрлемелле пулать.

Колхозсемпе совхозсенче выльăхсем валли апат хатĕрлессине татăклăн лайăхлатни кирлĕ. Выльăх апачĕн никĕсĕ нумай районсемпе колхозсенче тÿсме çук япăхса çитнĕ.

Ăçта мĕнле апат туса хатĕрлес ыйтăва зонăсен тăпра тата çанталăк условийĕсене шута илсе татса парас пулать. Анчах пур зонăсенче те сĕтеклĕ апатсем туса хатĕрлессине пур майсемпе те ÿстерсе пымалла, унсăрăн сĕт суса илессине хăвăрт ÿстерме май çук. Вăтаçĕрти районсемшĕн ку вăл, тĕслĕхрен, çĕрулми, выльăх кăшманĕ тата сахăр кăшманĕ, кишĕр, кабачки, кавăн, турнепс, кăнтăрти районсемшĕн—выльăх арбузĕ, кавăн, кабачки, хĕрлĕ кăшман пулать.

Силос хывма кукуруза, хĕвелçаврăнăш, выльăх купăсти тата ытти хăшпĕр культурăсем акса тăвасси çине ытларах пăхмалла.

Кукуруза пек паха выльăх апачĕ пулакан культура çинчен уйрăм каласа хăварни кирлĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç аталаннă чылай çĕршывсенче кукуруза акса тăвасси анлăн сарăлни ăнсăртран пулман. ССР Союзĕнче вара, кукуруза пулса çитĕнекен районсенче те, ăна ытла та сахал акаççĕ.

ССР Союзĕнчи нумай облаçсенче кукуруза акса тума лайăх условисем пур. Украинăри колхозсемпе совхозсем пысăк тухăçлă кукуруза туса илни çинчен калакан нумай тĕслĕхсем илсе кăтартма пулать. Полтава облаçĕнчи Коминтерн ячĕпе тăракан совхозра агроном Таран юлташ, тăваткал тĕмĕн-тĕмĕн акса, 1948 çултах пысăк çĕр лаптăкĕ çинче вăтам шутпа гектар пуçне 70-шер центнер кукуруза тĕшши туса илнĕ. Днепропетровск облаçĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Щербина юлташ) пилĕк çул хушшинче вăтам шутпа гектар пуçне 50-шар центнер кукуруза тĕшши туса илнĕ. Эпĕ кунта Днепропетровск облаçĕнчи Лиховски районĕнчи «Красный партизан» колхозри кукуруза туса илес тĕлĕшпе чапа тухнă Марк Евстафьевич Озерный тунă чаплă çитĕнÿсем çинчен каламастăп та ĕнтĕ, вăл çултан-çул пысăк тухăçлă кукуруза туса илет, 1948 çулта вăл гектар пуçне 224-шар центнер кукуруза туса илнĕ.

Мускав облаçĕнчи опыт центральнăй районсенче кукуруза силос масси нумай пани çинчен калать. Тăваткал тĕмĕн-тĕмĕн акнă чухне гектар пуçне 500 центнер тата ытларах та силос масси туса илме шанчăклă май пур. Çавăн пек, Мускав çывăхĕнчи «Путь новой жизни» колхоз тата «Горки-II» совхоз кашни гектар пуçне 700—800 центнертан кая мар силос масси туса илнĕ. Колхозсенчен пысăк пайĕ кашни гектар пуçне 700—800-шар центнер мар, 250—300-шер центнер симĕс масса туса илес пулсан та, ку вăл, тырпул акнă пĕр гектар çине куçарса шутласан, 225—260 килограмм услам çу туса илме çителĕклĕ пулнă пулĕччĕ.

Вырăнсенчи хăшпĕр руководительсем, выльăх апачĕ çитменни çинчен калаçнă вăхăтрах, кукуруза акмалли çĕр лаптăкне чакарасси çинчен ыйту хускатаççĕ. Уйрăммăн илсен, ку тĕлĕшпе пирĕн Украинăри юлташсем те çылăхлă. Ыйтас килет, выльăх апатне баякан культурăсенчен кунтан тухăçлăрах пулакан урăх мĕнле культурăна асăнма пултарĕччĕç вĕсем?

Кукуруза тĕшши туса илессине ÿстерес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнни кирлĕ, силос валли кукуруза акса тумалли зонăна чылай сарас пулать. Силос валли кукуруза акса тăвассине вăтаçĕрти хура тăпраллă зонăри тата хура тăпраллă мар тăрăхри чылай облаçсене, çавăн пекех Белоруссири тата Балтий тинĕсĕ тăрăхĕнчи республикăсенчи районсене сарса пырас пулать. Силос валли кукуруза акса тумалли çĕр лаптăкне ÿстерни Уралти, Çĕпĕрти, Инçет Хĕвелтухăçĕнчи кăнтăр енчи районсенчи, Казахстанăн çурçĕр районĕсенчи колхозсемпе совхозсемшĕн пысăк вырăн йышăнса тăрать. Силос валли кукуруза, хĕвелçаврăнăш тата ытти культурăсем акнипе пĕрлех, кашни колхозра тата совхозра кашни ĕне пуçне 5—6-шар тонна паха силос хатĕрлесе хума кирлĕ чухлĕ силос сооруженийĕсем тăвас пулать.

Парти органĕсен, уйрăмах вăтаçĕрти хура тăпраллă тата хура тăпраллă мар облаçсенчи парти органĕсен, выльăх апачĕ валли çĕрулми лартса ÿстерессине хакламаннине татăклăн пĕтерсе пырас пулать.

Улăх-çарансемпе тата кĕтÿ çÿретмелли вырăнсемпе усă курас тата вĕсене лайăхлатас ĕç çителĕксĕр тăрать. Колхозсенче кашни шултра выльăх пуçне 1941 çулта 11 центнер утă хатĕрленĕ пулсан, 1952 çулта 9,6 центнер хатĕрленĕ. Улăх-çарансемпе акнă курăксен тухăçне татăклăн ÿстерни, люцерна, клевер, тимофеевка, эспарцет акса тăвассине пур майсемпе те сарса пыни кирлĕ. Кăнтăрти районсенче уйрăмах суданка çине тимлĕ пăхни кирлĕ, мĕншĕн тесен вăл питĕ лайăх утă нумай парать. Çурçĕрти тата центрти районсемшĕн викăпа сĕлĕ хутăшĕ лайăх.

Колхозсемпе совхозсенче выльăхсене кĕтÿре çÿретмесĕр лагерьсенче, симĕс конвейерпа усă курса, усрассине анлăн пурнăçласа пырас пулать. Ку вăл ĕнесем сĕт парассине ÿстермелли чи лайăх май пулса тăрать.

Парти, совет, ялхуçалăх органĕсем, ялхуçалăхĕнчи мĕнпур работниксем выльăх апачĕ хатĕрлемелли çирĕп никĕс туса хурас ĕçе тивĕçлипе туса пыма тытăнмасан выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла яма çук. Çав вăхăтрах партипе совет работникĕсем нумайăшĕ выльăх апачĕ акса ÿстерес тата хатĕрлес ĕç çине иккĕмĕш вырăнта тăракан ĕç çине пăхнă пек пăхаççĕ. Çак ĕçе кашни колхозра, кашни совхозра конкретлă ертсе пырас вырăнне, хăшпĕр юлташсем штурмовщина тăваççĕ, декларацисем каласа лараççĕ.

Акă, тĕслĕхрен, выльăх апачĕ хатĕрлессипе çыхăнса тăракан задачăсене татса парасси çинчен партин Вологда обкомĕн секретарĕ Семин юлташ мĕнле шутлать. Парти обкомĕн пленумĕнче доклад тунă чухне вăл,—докладне каярахпа облаçри хаçатра пичетлесе кăларнă,—çапла каланă: «Хăвна ху çапла ĕнентерес пулать—выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ĕç пуçламăшĕ, тĕп сăлтав—выльăх апачĕ хатĕрлемелли никĕс мар. Малтан—руководство, ун хыççăн вара—апат никĕсĕ». Малалла вăл утă çулас ĕçе штурм йĕркипе, 10—15 кун хушшинче, ирттерме сĕннĕ. «Пурте штурма тухнипе кăна,—тенĕ вăл,—çак кĕрешÿре çĕнтерме пулать». Семин юлташ «пĕтĕм ĕçе организацилеме тата ертсе пыма колхозсене е районсене пĕрлештерсе тăракан штабсем туса хума» сĕнет.

Ыйтас пулать: утă çулса пуçтарас ĕçе вырăнсăр шухăшласа кăларнă штабсем ертсе пыраççĕ пулсан, парти райкомĕсем, райисполкомсем ăçта-ха вара, вĕсем мĕн тăваççĕ? Партин Вологда обкомĕпе облисполком выльăх апачĕ хатĕрлессине ертсе пырас ĕçрен пăраннă. Савна пула облаçре августăн 25-мĕшĕ тĕлне пухса кĕртмен çаран курăкĕпе акнă курăксем 159 пин гектар çинче пулнă, силос хывмалли плана вара 57 процент çеç пурнăçланă.

(Малалли 3-мĕш страницăра).

Н. С. ХРУЩЕВ юлташ доклачӗ

(Малалли).

Выльӑх апачӗ ҫителӗклӗ хатӗрлес ыйтӑва татса памасӑр выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхне хӑвӑрт ӳстерме май ҫук. Вунӑ ҫул ытла ӗнтӗ колхозсенче кашни ӗнерен сӗт 1.000—1.070 килограмран ытла суса илеймесҫӗ, апир малашне ҫакӑнпа килӗшсе пурӑнма пултараймастпӑр. Ҫавна тӳссе тӑма ҫук. Вӗт малта пыракан хуҫалӑхсем, сӑмахран, «Бараваево», «Горки-II», «Лесные поляны», «Холмогорка» совхозсем, Кострома облаҫӗнчи «12 Октябрь», Архангельск облаҫӗнчи «Новая жизнь» колхозсем, ӗнесене сӗтеклӗ апатсем нумай ҫитерсе, темиҫе ҫул хушши вӑтам шутпа кашни ӗнерен 4.500—5.000—6.000 килограмм тата ытларах та сӗт суса илеҫҫӗ.

Сыснасене лайӑх апатпа самӑртассине анлӑн сарса, сыснасенчен тупӑш ытларах илесси ҫине тимлӗн пӑхни кирлӗ, мӗншӗн тесен ҫӗршывра аш-какай туса хатӗрлес ӗҫре сыснасенчен илекен продукци тивӗҫлӗ вырӑн йышӑнман-ха. Сыснасенчен илнӗ пӗтӗм продукци 1940 ҫулта 1,5 миллион тонна пулнӑ пулсан, 1952 ҫулта 1,6 миллион тонна пулнӑ.

Ҫӗршывра ҫӑм хатӗрлессине ӳстерсе пыни те питӗ пысӑк ӗҫ пулать. Чылай облаҫсемпе районсенче сурӑхсенчен ҫӑм нумай касса илеҫҫӗ. Ставрополь крайӗнчи колхозсем 1952 ҫулта ҫинҫе ҫӑм кашни сурӑхран 5,2 килограмм касса илнӗ. Ҫапах та ҫӗршывра ҫӑм ҫителӗксӗр. Казах ССР-ӗн руководителӗсене хытӑ критиклеме тивӗҫлӗ. Хальхи вӑхӑтра республикӑра сурӑхсемпе качакасем 17 миллион пуҫ усраҫҫӗ, 1928 ҫулта 19 миллион пуҫ ытла пулнӑ. Ҫинҫе ҫӑмлӑ сурӑхсен шучӗ 1940 ҫулхипе танлаштарсан 4 хут ытла хушӑннӑ пулин те, ҫав вӑхӑтрах вӑтам шутпа кашни сурӑхран ҫӑм касса илни 2,4 килограмран 1,9 килограмм таран чакнӑ. Ҫавӑнпа ӗнтӗ Казахстанра государствӑна ҫӑм памалли плана 60—70 процент ҫеҫ тултарнинчен тӗлӗнмелли ҫук.

Выльӑх апачӗ ҫителӗклӗ хатӗрлес ыйтӑва татса парас енӗпе колхозсенче выльӑх апачӗ хатӗрлес ӗҫе механизацилессине малалла ӳстерсе пыни пысӑк вырӑн йышӑнать. Юлашки виҫӗ ҫул хушшинче МТС-сем утӑ ҫулас тата силос хывас ӗҫсене механизацилес тӗлӗшпе чылай ытларах ӗҫлеме пуҫларӗҫ, ҫапах та МТС-сем выльӑх апачӗ хатӗрлес ӗҫе питӗ ҫителӗксӗр туса пыраҫҫӗ, ку ӗҫ тӗштырӑ хуҫалӑхне механизациленин шайӗнчен нумай кая юлнӑ.

Утӑ ҫулса пуҫтарас тата капана хывас ӗҫе кӗске срокра туса ирттересси ҫине уйрӑмах тимлӗн пӑхни кирлӗ. Ку ӗҫсене вӑрӑм вӑхӑт хушши туса пырсан утӑ пахалӑхӗ чакать. Пурте пӗлеҫҫӗ, курӑк ватӑлса кайсан е ҫулнӑ курӑка нумай вӑхӑт хушши пуҫтармасӑр вырттарсан утӑри выльӑхшӑн усӑллӑ япаласем ҫухалаҫҫӗ. Ҫапла ӗнтӗ, утӑ ҫулса пуҫтарас ӗҫе вӑраха янӑ пирки, эпир кашни гектартан апат единицисем илме май пурринчен чылай сахалрах илетпӗр.

1954—1955 ҫулсенче утӑ ҫулас тата утӑ пуҫтарас ӗҫе 80 процент, утӑ капанӗсем тӑвассине 65 процент, силос хывассине 75 процент тата силос культурисемпе выльӑхсене ҫитермелли тымарҫимӗҫсен рет хушшисене ҫемҫетес ӗҫе 95 процент таран механизацилеме палӑртнӑ. Ҫавӑн пекех тата МТС-сене ҫарансемпе кӗтӳ ҫӳретмелли вырӑнсене тӗпренех лайӑхлатас тӗлӗшпе ытларах ӗҫлеттерме палӑртса хунӑ. Кунпа пӗрлех выльӑх-чӗрлӗх фермисенче вӑй нумай илекен ӗҫсене механизацилессине пур майсемпе те вӑйлатса пымалла.

Пӗтӗм выльӑх-чӗрлӗхе усрама ҫуртсем ҫителӗклӗ туни питӗ кирлӗ. Центросоюз енӗпе, ҫавӑн пекех вырӑнсенчи коопераци тата государство промышленноҫӗ енӗпе колхозсене строительство материалӗсем сутассине ӳстермелле. Май пур вырӑнсенче колхозсене хӑйсен вӑйӗпех хӑйсене валли кирпӗч, черепица тата известь туса хатӗрлеме сӗнес пулать.

Ку таранччен обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетесси кая юлнин сӑлтавӗсем тата ку ӗҫе вӑйлатмалли ҫулсем ҫинчен сӑмах пычӗ. Ку вӑл пирӗн тӗп задача. Анчах пирӗн колхозниксем хӑйсен килӗсенче усракан выльӑхсем ҫинчен те манмалла мар. Кунта та ӗҫ чӑпӑл мар. Вӑрҫӑ умӗнхи вӑхӑтра пулнипе танлаштарсан, халӑх килте усракан ӗнесен шучӗ 6,5 миллион пуҫ чухлӗ чакнӑ. Ӗне усраман колхозниксен хуҫалӑхӗсен шучӗ 45 процент ӳснӗ.

СССР Верховнӑй Совечӗ нумай пулмасть ялхуҫалӑх налогӗ ҫинчен йышӑннӑ ҫӗнӗ Закон выльӑх-чӗрлӗх усрама колхозниксене ытларах интереслентерекен условисем туса пачӗ. Вырӑнсенчи парти, совет тата ялхуҫалӑх органӗсем, обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетессине аталантарса пынипе пӗрлех, килте выльӑх-чӗрлӗх усрас тӗлӗшпе колхозник интересӗсене хӗсекен сиенлӗ практикӑна пӗтӗмпех пӗтерсе ҫитерни кирлӗ. Колхозник килӗнче ялхуҫалӑх артелӗн Уставӗнче кӑтартнӑ норма чухлӗ выльӑх-чӗрлӗх усрани социализмла стройшӑн хӑрушлӑх пулать тесе парти политикине, Совет государствин политикине ӑнланман сынсем ҫеҫ шутлама пултараҫҫӗ. Ҫавӑн пекех тата рабочипе служащи килте выльӑх-чӗрлӗх усрани намӑс тевен айван шухӑша та пӗтерес пулать.

Колхозниксем, рабочисем тата служащисем хӑйсен килӗнче выльӑх-чӗрлӗх усрамалла тӑвас тӗлӗшпе сӗнӳсем пани колхозсемпе совхозсенче обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетесси ҫине сахалрах пӑхмаллине пӗртте пӗлтермест.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ыйтӑва татса памалли тӗп ҫул обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетессине вӑйлатса пырасси пулнӑ, малашне те ҫавӑн пекех пулать. Малашне ҫакӑн пек вӑхӑт ҫитӗ: обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетесси вӑйлӑ аталанӗ, колхозник хӑйне кирлӗ выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсене пӗтӗмпех обществӑлла хуҫалӑх парса тӑрӗ, вара колхозникшӗн килте выльӑх-чӗрлӗх усрани усӑллӑ мар пулса тӑрӗ.

Анчах халӗ ун пек мар, хальхи вӑхӑтра обществӑлла хуҫалӑхра ӗрчетнӗ выльӑх-чӗрлӗх пӗтӗм халӑха, вӑл шутра колхозниксене те, выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем ҫителӗклӗ парса тӑма пултараймасть, колхозниксем хӑйсен килӗнче выльӑх-чӗрлӗх усрани обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетессине чӑрмантармасть, пулӑшать, ҫавӑнпа та ку вӑл колхозниксемшӗн те, колхозсемшӗн те тата государствӑшӑн та усӑллӑ.

Ҫапла ӗнтӗ, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе малалла вӑйлатса пыма ҫак ӗҫсене тумалла:

выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетессине ертсе пырас ӗҫе татӑклӑн лайӑхлатмалла, фермӑсенче яланах ӗҫлеме лайӑх кадрсем тупса ҫитермелле;

обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫпе колхозсемпе колхозниксене экономика тӗлӗшпе ытларах интереслентермелле;

обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх йышне, уйрӑмах ӗнесен йышне тата тухӑҫлӑхне ӳстерме мерӑсем йышӑнмалла, ҫапла вара ку тӗлӗшпе 1954 ҫултах чылай пысӑк ҫитӗнӳсем тумалла пултӑр;

обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх валли апат хатӗрлемелли никӗсе ҫирӗплетмелле, пӗтӗм выльӑх-чӗрлӗх валли апат ҫителӗклӗ хатӗрлемелле;

выльӑх апачӗ туса хатӗрлес ӗҫе тата фермӑсенче вӑй нумай илекен ӗҫсене ытларах механизацилемелле, пӗтӗм обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх валли лайӑх суртсем туса лартмалла, выльӑх-чӗрлӗхе лайӑх тӑрантарса тата лайӑх пӑхса усрамалла;

колхозниксене продуктивлӑ выльӑх-чӗрлӗх туянма пулӑшмалла.

Юлташсем! Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе хӑвӑрт вӑйлатни ҫӗршывшӑн питӗ кирлӗ тата хальхи вӑхӑтра ялхуҫалӑхӗ енӗпе партипе государство чи малтан пурнӑҫламалли задача пулса тӑрать. Пирӗн пысӑк та кӑткӑс ӗҫ туса пымалла пулать. Анчах, йывӑрлӑхсем пысӑк пулин те, пирӗн ҫак ӗҫе ӑнӑҫлӑн туса ҫитермелле, сывӑхри икӗ-виҫӗ ҫул хушшинче выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем туса хатӗрлессине нумай ӳстермелле.

(Юлашки ҫитес номерте пулать).

Партин Шупашкар хула организацийӗн XV-мӗш конференцийӗ

Партин Шупашкар хула организацийӗн XV-мӗш конференцийӗ пулса иртрӗ. Конференци кун йӗркинче ҫак ыйтусем пулчӗҫ:

1. КПСС Шупашкар хула комитечӗн ӗҫӗсем ҫинчен тунӑ отчет;
2. Ревизи комиссийӗн отчечӗ;
3. КПСС хула комитетне суйласси;
4. Ревизи комиссине суйласси.

КПСС Шупашкар хула комитечӗн 1952 ҫулхи сентябрьпе 1953 ҫулхи сентябрь уйӑхӗсем хушшинчи ӗҫӗсем ҫинчен хула комитечӗн секретарӗ Н. Никитин юлташ доклад туса пачӗ.

— Партин хула комитечӗ,—тет Никитин юлташ,—КПСС XIX-мӗш съезчӗн решенийӗсене пурнӑҫласа, ҫак отчетлӑ тапхӑрта парторганизацисене малалла тӗреклетсе ҫирӗплетрӗ, государство планӗсене тултарассишӗн пыракан кӗрешӗве организацилес тӗлӗшпе парторганизацисен рольне ӳстерчӗ, массӑсемпе анлӑ сыхӑну тытассине вӑйлатрӗ, партилле-организацилле тата партилле-политикӑлла пӗтӗм ӗҫе лайӑхлатрӗ.

Хулари промышленноҫа ертсе пырас ӗҫ ҫинчен каласа, докладчик ҫакна палӑртрӗ: Шупашкар хулинчи пӗтӗм промышленность 1952 ҫулта продукци туса кӑлармалли плана 101,2 процент, кӑҫалхи сакӑр уйӑхри плана 105,5 процент тултарнӑ. Ҫак вӑхӑтра, пӗлтӗрхи тивӗҫлӗ тапхӑртипе танлаштарсан, продукци 20 процент ытларах туса кӑларнӑ.

Электроаппаратура заводӗнче кӑҫалхи сакӑр уйӑхра, пӗлтӗрхи ҫав вӑхӑт хушшинчипе танлаштарсан, продукци туса кӑларасси 33 процент ӳснӗ.

Кӑҫал лента тӗртекен фабрика ӑнӑҫлӑ ӗҫлет. Пир-авӑр комбиначӗ плана иртте̍рсе тултарнӑ, вӑл кӑҫал продукци икӗ хут нумайрах туса кӑларма пуҫланӑ. Атӑл леш енчи торфопредприятин коллективӗ торф кӑлармалли плана срокчен тултарнӑ. Кокшайск химлесхозӗ, эрех комбиначӗ, механизированнӑй вӑрман пункчӗ, ҫу завочӗ, сӑра завочӗ, макарон фабрики, апат-ҫимӗҫ комбиначӗ, промысла кооперацийӗн тӑхӑр артелӗ тата ытти хӑшпӗр предприятисем хӑйсен планӗсене чылай иртте̍рсе тултарнӑ. Нумай предприятисенче туса кӑларакан продукцин пахалӑхӗ лайӑхланнӑ.

Анчах партин хула комитечӗ промышленность предприятийӗсене пурне те лайӑх ӗҫлеттермелле тӑвас тӗлӗшпе КПСС XIX-мӗш съезчӗ панӑ кӑтартусене пурнӑҫласа ҫитерейменрӗ. Кӑҫал 18 предприяти начар ӗҫлеҫҫӗ, производство планӗсене тултараймаҫҫӗ. «Водосвет» тресчӗ япӑх ӗҫлет. Капитальнӑй строительство ӗҫӗ ӗлӗкхи пекех начар пурнӑҫланса пырать. Правительство промышленноҫа аталантарма, пурӑнмалли ҫуртсем, культурӑпа йӑла учрежденийӗсем лартма паракан укҫа-тенкӗрен чылай пысӑк пайӗ усӑ курмасӑр юлать. 1952 ҫулта хулара капитальнӑй строительство планне 75,6 процент, кӑҫалхи сакӑр уйӑхра—70,1 процент кӑна тултарнӑ.

«Легпромстройӑн» 11-мӗш тресчӗ юлашки виҫӗ уйӑх хушшинче плана тултарса пырать. Ҫак пысӑк стройкӑри ӗҫсем хӗлле тата ҫуркунне юлса пычӗҫ пулсан, ҫав кая юлнине пӗтересси, ӗҫсене лайӑхлатасси питех те вӑраххӑн пулса пырать. Трестри парторганизаци юлашки вӑхӑтра массӑллаполитикӑлла ӗҫе лайӑхлатрӗ, строительство ыйтӑвӗсене тӗплӗнрех тӗпчесе пӗлме пуҫларӗ. Анчах вӑл производствӑна организацилес ӗҫри ҫитменлӗхсене пӗтерейменрӗ-ха. Ҫавна пула строительство пахалӑхне лайӑхлатасси тата строительство хакне йӳнетесси ҫинчен партин XIX-мӗш съезчӗ панӑ кӑтартусем стройкӑра пурнӑҫланса пымаҫҫӗ.

«Чӑвашстрой» трест питех те ҫителӗксӗр ӗҫлет. «Росмясмолстрой» трестӑн строительствӑпа монтаж управленийӗ плана тултарса пыраймасть.

— Промышленность ӗҫӗнче тата стройкӑсенче ҫакӑн пек пысӑк ҫитменлӗхсем пурри,—тет Никитин юлташ,—партин хула комитечӗ, унӑн промышленноҫпа транспорт пайӗ кая юлнӑ предприятисемпе стройкӑсен ӗҫне лайӑхлатас тӗлӗшпе тӑрӑшса ӗҫлеменнине, пуҫламӑш парторганизацисене администрацин хуҫалӑхла ӗҫӗсене тӗрӗслесе тӑмалли правӑна пурнӑҫлас ӗҫре сахал пулӑшнине кӑтартса парать. Кая юлнӑ предприятисемпе стройкӑсенчи пуҫламӑш парторганизацисем партин XIX-мӗш съезчӗн решенийӗсенчен тивӗҫлӗ выводсем туман, предприятисен хуҫалӑхла ӗҫӗсене тӗпӗ-пӗрӗпе пӗлсе ҫитме тӑрӑшман, партилле-политикӑлла ӗҫе лайӑхлатайман, ӗҫре критикӑпа самокритикӑна анлӑ сарса ярайман, ҫитменлӗхсене пӗтереймен.

— Пирӗн предприятисемпе стройкӑсен пурин те плана тултарма тата иртте̍рсе тултарма пур майсем те ҫителӗклӗ,—тет Никитин юлташ,—эпир плансене, партин XIX-мӗш съезчӗ хушнӑ пек, пӗтӗмпех тултарса пыма тивӗҫлӗ.

Малалла докладчик хула хуҫалӑхне аталантарасси ҫинчен нумай каларӗ. 1952 ҫулта пурӑнмалли ҫӗнӗ ҫуртсем, коммунальнӑй предприятисем лартма, культурӑпа йӑла учрежденийӗсем тума, хулана лайӑхлатса илемлетме, ведомствӑсемпе предприятисем енӗпе панӑ укҫа-тенке те шута илсен, пӗтӗмпе 18,3 миллион тенкӗ пӗтернӗ. 1953 ҫулта ҫак ӗҫсене тума 30,6 миллион тенкӗ уйӑрса панӑ, ҫав шутран сакӑр уйӑх хушшинче 14,1 миллион тенкӗпе усӑ курнӑ. Хулана лайӑхлатса илемлетес тӗлӗшпе нумай ӗҫсем туни ҫинчен каласа, Никитин юлташ хула благоустройствин тӗп ыйтӑвӗсене питех те ерипен татса панине, уйрӑм предприятисемпе суртсене лартас, уйрӑмах пурӑнмалли суртсем лартас ӗҫ тӳсме ҫук вӑраха кайнине палӑртрӗ. КПСС хула комитечӗ тата хула Совечӗн исполкомӗ, пурӑнмалли суртсем хулара нумай ҫитмеҫҫӗ пулин те,

суртсем лартас ӗҫ ҫине тимлӗн пӑхман, хуҫалӑхпа строительство организацийӗсенчен сурт-йӗрсем лартма паракан пӗтӗм укҫапа вӑхӑтра усӑ курма ҫирӗп ыйтман, ҫавна пула кӑҫалхи сакӑр уйӑх хушшинче пурӑнмалли ҫуртсем лартмалли плана 46,4 процент ҫеҫ пурнӑҫланӑ. Пурӑнмалли ҫуртсем лартас ӗҫе пир-авӑр комбиначӗ, «Легпромстройӑн» 11-мӗш тресчӗ, аш-какай тресчӗ, «Чӑвашстрой» тресчӗ уйрӑмах начар пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Водопровода вӑрӑмлатма панӑ укҫа-тенкӗн пӗр пайӗ усӑ курмасӑр юлать. Электричество линийӗсене тӑсас тата юсаса лайӑхлатас ӗҫ те питӗ ҫителӗксӗр пулса пырать. Чылай урамсем юхӑнса кайнӑ. Ведомствӑсем хӑйсен пурӑнмалли ҫурчӗсене лайӑх пӑхса усрама кирлӗ пек тӑрӑшмаҫҫӗ. Ӗҫсыннисен йӑла ыйтӑвӗсене тивӗҫтерессине начар йӗркеленӗ.

Хулара суту-илӳ ҫултан-ҫул вӑйланса пырать, тавар ҫаврӑнӑшӗ пысӑкланать. Пӗлтӗрхипе танлаштарсан, кӑҫал халӑха апат-ҫимӗҫпе промышленность таварӗсем нумай ытларах сутнӑ. Анчах суту-илӳ ӗҫне хальхи пек йӗркелени ӗҫсыннисен ыйтӑвӗсене тивӗҫтереймест, ку ӗҫ партипе правительство хушнӑ пек пулса пымасть. Суту-илӳ организацийӗсен ӗҫӗнче ҫитменлӗхсем нумай. Суту-илӳ министерстви республика центрӗнче суту-илӗве лайӑхлатма кирлӗ пек тӑрӑшмасть. Парти организацийӗсем суту-илӳ работникӗсем хушшинче политикӑлла воспитани ӗҫне начар туса пыраҫҫӗ.

Унтан Никитин юлташ ӗҫсыннисене медицина пулӑшӑвӗ парас ӗҫе лайӑхлатас тӗлӗшпе тӑракан задачӑсем ҫинчен каларӗ. Вӑл хула Совечӗн исполкомне тата унӑн сывлӑх пайне хытӑ критиклет. Вӗсем сывлӑха сыхлас ыйтусене тӗплӗн тӗпчесе пӗлмеҫҫӗ, ыйтусене кирлӗ пек татса пама тӑрӑшмаҫҫӗ. Хулари медицина учрежденийӗсен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене пӗтерме, ҫав учрежденисен шутне нумайлатма республикӑн Сывлӑх министерстви ҫителӗклӗ таран мерӑсем йышӑнмасть.

Отчетлӑ тапхӑрта шкулсенче вӗрентӳпе воспитани ӗҫӗ лайӑхланнӑ, анчах ку ӗҫре халӗ те пысӑк ҫитменлӗхсем пур-ха. Пур ачасене те ҫичӗ ҫул вӗрентмелли закон пурнӑҫланса пымасть. Шкулсенче вӗренӳре ӗлкӗрсе пыраймannисем чылай. Уйрӑмах вырӑс чӗлхипе тата математикӑпа вӗренӳре ӗлкӗрсе пыраймannисем йышлӑ. Учительсен ӗҫри ответлӑхне ӳстермелле.

Аслӑ шкулсемпе техникумсенче те вӗрентӳпе воспитани ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем пур. Лекцисемпе семинарла занятисене хӑшпӗр чухне идейӑпа теори тӗлӗшӗнчен тивӗҫлӗ шайра ирттермеҫҫӗ, марксистла-ленинла теори ҫинчен кӗнекере ҫырнине вуланипех, нимӗн ӑнлантармасӑрах каласа параҫҫӗ. Партин хула комитечӗ, унӑн пропагандӑпа агитаци пайӗ шкулсен ӗҫне начар тӗрӗслесе тӑраҫҫӗ, вӗсене кирлӗ пек пулӑшмаҫҫӗ.

Отчетлӑ тапхӑрта ҫӗнӗрен 30 пуҫламӑш парторганизаци тата цехри 2 парторганизаци тунӑ. Хальхи вӑхӑтра пуҫламӑш парторганизацисем 200, цехсенчи парторганизацисем 31, парти групписем 110. Парти ретӗнче тӑракансен йышӗн пахалӑхӗ лайӑхланнӑ. Ҫапах та хула комитечӗ парти речӗсене ӳстерес ӗҫе кирлӗ пек йӗркелемен. Партин хӑшпӗр пуҫламӑш организацийӗсем парти ретне кашни сынна уйрӑммӑн суйласа илмелли принципа пӑснӑ.

КПСС хула комитечӗ тата унӑн парти, профсоюз, комсомол организацийӗсен пайӗ парти ретне малта пыракан рабочисен шучӗпе тӑтӑшах ӳстерсе пыма кирли ҫинчен пуҫламӑш парторганизацисене тӑтӑшах астутарса тӑман. Нумай пуҫламӑш парторганизацисенче кандидатсене воспитани парас тӗлӗшпе начар ӗҫлеҫҫӗ. Парти членӗн кандидачӗсенчен 69 проценчӗн кандидатра тӑмалли срок тухнӑ.

Пур парторганизацисенче те халӗ парти пухӑвӗсене уйӑхра пӗр хутран кая мар ирттереҫҫӗ. Пухусем йӗркеллӗ пулса иртеҫҫӗ, вӗсенчи ыйтусене сӳтсе явма нумай коммунистсем активлӑ хутшӑнаҫҫӗ.

Отчетлӑ тапхӑрта хула комитечӗн бюровӗнче 32 пуҫламӑш парторганизаци секретарӗсен отчечӗсене итленӗ. Хула комитечӗн аппаратӗнче ӗҫлекенсем, хула комитечӗн членӗсем, парти активӗ нумай пуҫламӑш парторганизацисен ӗҫне, вӗсем партилле-организацилле тата политикӑлла ӗҫсен тӗрлӗ участокӗсене мӗнле ертсе пынине, предприятисен администрацийӗсен хуҫалӑхла ӗҫӗсене контроллесе тӑмалли правӑна мӗнле пурнӑҫланине тӗрӗсленӗ.

Анчах хула комитечӗ, унӑн секретарӗсем, пайӗсен заведующийӗсем, инструкторсем пуҫламӑш парторганизацисемпе тытакан сыхӑну ҫителӗксӗр.

Чылай предприятисемпе учрежденисенче (Чӑвашторгӑн Атӑл леш енчи уйрӑмӗ, «Чебторгин» артель тата ытти те) кадрсем суйласа илсе ӗҫе вырнаҫтарас енӗпе парти принципне пӑснисем пулнӑ, работниксене пӗр-пӗрипе туслӑ пулнине, пӗрпӗрне пӗлнине, малтан пӗр ҫӗрте пурӑннине, тӑван-хурӑнташ пулнине кура ӗҫе илнӗ.

Отчетлӑ тапхӑрта хулари парторганизацире критикӑпа самокритика вӑйланнӑ. Хула комитечӗн пленумӗсенче, парти активӗн пухӑвӗсенче, пуҫламӑш парторганизацисенче коммунистсем парти, совет тата хуҫалӑх организацийӗсен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене хӑюллӑнрах тата активлӑрах усса палӑртма тытӑннӑ. Ҫавӑнпа пӗрлех партин хула комитечӗ кашни парторганизацин секретарьне, кашни коммуниста ҫитменлӗхсене пӗтерессишӗн хытӑ тӑрӑшма, критика ҫине парти вӗрентнӗ пек пӑхма воспитани парайман-ха. Хулари чылай предприятисемпе учрежденисенче критикӑпа самокритикӑна хӑюллӑн анлӑ сарма условисем туман, рабочисемпе служащисен пухӑвӗсене сайра хутра ҫеҫ ирттереҫҫӗ.

Рядовой работниксем критиклесе асӑрхаттарни ҫине руководительсенчен хӑшпӗрисем сиввӗн пӑхаҫҫӗ.

Тараса юсакан завод директорӗ Андреев юлташ хӑйне критикленӗшӗн цех начальникне Матвеев юлташа ӗҫрен кӑларнӑ. Пуҫламӑш парторганизацири коммунистсем Андреевӑн ҫак ӗҫне сивленӗ, вӑл тӗрӗс мар тунӑ тесе йышӑннӑ. Андреев юлташӑн ирӗксӗрех Матвеев юлташа ӗлӗкхи ӗҫе каялла илме тивнӗ. Ҫапах та пуҫламӑш парторганизаци Андреев юлташа критикӑна хытӑ хӗснӗшӗн парти енӗпе ответ тыттарма хӑяйман, вӑй ҫитереймен. Партин хула комитечӗ те ҫак факт пирки ӗҫе вӑхӑтра пӑхса тухман.

Ялхуҫалӑх институчӗн директорӗ Калинцев юлташ коммунистсем критиклесе асӑрхаттарнисене шута илмен, ҫавӑн пек асӑрхаттарнисем ҫине тӗрӗс пӑхман, ҫакӑншӑн юлашки отчетпа суйлав пухӑвӗнче ӑна хытӑ критикленӗ, партбюро членне тата хулари партконференцие кайма делегата суйламан.

Малалла Никитин юлташ партин хула комитечӗ ӗҫсынни депутачӗсен хула тата поселок Совечӗсене мӗнле ертсе пыни ҫинчен каласа пачӗ. Вӑл хула Совечӗн исполкомӗнче ӗҫпе пыракан ӗҫсыннисене ӑшӑ кӑмӑлпа кӗтсе илмен фактсем пулнине палӑртрӗ. Йышӑннӑ решенисене пурнӑҫлас енӗпе организацилле ӗҫсене тата хула Советне пӑхӑнса тӑракан предприятисемпе учрежденисене ертсе пырас ӗҫе начар йӗркеленӗ. Хула Совет исполкомӗн председателӗ Енчиков юлташ, унӑн заместителӗсем—Киселевпа Сергеева юлташсем халӑхӑн культурӑпа йӑла ыйтӑвӗсене тивӗҫтерессипе сыхӑннӑ ыйтусене татса пама кирлӗ пек тӑрӑшмаҫҫӗ, ку ӗҫ енӗпе исполком пайӗсемпе управленийӗсен тата поселок Совечӗсен ответлӑхне ӳстермеҫҫӗ.

Докладчик хулари комсомолпа профсоюз организацийӗсен ӗҫне лайӑхлатма кирлине палӑртать. Вӑл ирӗклӗ обществӑлла организацисене ертсе пырас ӗҫре пысӑк ҫитменлӗхсем пурри ҫинчен калать.

— Отчетлӑ тапхӑрта,—тет докладчик,—КПСС хула комитечӗ, партин XIX-мӗш съезчӗн решенийӗсене тата хулари парторганизацин XIV-мӗш конференцийӗн решенийӗсене пурнӑҫласа, коммунистсене тата партире тӑман ӗҫсыннисене марксистла-ленинла воспитани парас ӗҫе чылай лайӑхлатрӗ. Парторганизацисенчи политшкулсемпе кружоксенче итоглӑ занятисем, семинарсем, теорилле каласусем ирттерни ҫакна кӑтартса пачӗ: занятисене ҫӳрекенсем марксистла-ленинла наукӑна тӗплӗрех вӗренме пуҫланӑ, теорилле вӗренӗве хуҫалӑхпа культура строительствин практикӑлла задачӑсене татса парас ӗҫпе тачӑрах ҫыхӑнтарса пыраҫҫӗ.

Ҫавӑнпа пӗрлех политикӑлла вӗренӗве организацилес ӗҫре пысӑк ҫитменлӗхсем пулнӑ. Кружоксемпе политшкулсенчен чылайӑшӗ, марксистла-ленинла теорне харпӑр хӑй тӗллӗн вӗренекенсенчен нумайӑшӗ вӗренӳ планӗсене пурнӑҫлайман.

Иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнче уйрӑм парторганизацисенче партире тӑман активӑн политикӑлла вӗренӗвне организацилеме тӑрӑшман. Хула комитечӗпе пуҫламӑш парторганизацисем комсомолецсемпе союзра тӑман ҫамрӑксен марксистла-ленинла вӗренӗвне йӗркелес ыйтусемпе сахал ӗҫленӗ.

Партилле пропаганда ӗҫӗнчи пысӑк ҫитменлӗхсем пулнин сӑлтавӗ ҫакӑн пек: КПСС хула комитечӗн бюровӗ тата пропагандӑпа агитаци пайӗ коммунистсемпе партире тӑман активӑн политикӑлла вӗренӗвне ҫителӗксӗр ертсе пынӑ, партилле пропаганда содержани енӗпе мӗнле пулса пынине тӗплӗн пӗлсе ҫитме тӑрӑшман, кружоксемпе семинарсен ӗҫӗсене, лекцисемпе докладсен содержанийӗ мӗнлине кирлӗ пек тӗрӗслесе тӑман, занятисен идейӑлла шайне хӑпартма пуҫламӑш парторганизацисене сахал пулӑшнӑ.

КПСС хула комитечӗн бюро членӗсем кружоксен, политшкулсен тата семинарсен занятийӗсенче сайра хутра ҫеҫ пулнӑ. Пропагандӑпа агитаци пайӗ пропагандистсен семинарӗсен содержанийӗпе сахал интересленнӗ. Хӑшпӗр пропагандистсемпе консультантсем семинарсене ҫӳремен.

Лекцилле пропагандӑна ҫителӗклӗ сарман, лекцисен идейӑлла шайӗ коммунистсемпе партире тӑманнисен ӳссе пыракан ыйтӑвӗсене тивӗҫтереймест.

Докладчик кружоксемпе политшкулсене ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне лайӑх хатӗрлеме кирлине, коммунистсене, комсомолецсене, партире тӑман активистсене пурне те политикӑлла вӗренӗве явӑҫтарма кирлине палӑртать.

Ӗҫсыннисене коммунизмла воспитани парас тӗлӗшпе идеологилле ӗҫӗн пур майсемпе те усӑ курмалла. Ӗҫсыннисене совет патриотизмӗ майлӑ пулма, халӑхсен туслӑхне хисеплеме, политикӑлла сыхӑлӑхлӑ пулма воспитани парас пулать. Ӗҫсыннисене коммунизмла воспитани панипе хулари рабочисен, служащисен тата интеллигенцин активлӑхне ӳстерсе пымалла, вӗсене пиллӗкмӗш пилӗк ҫуллӑх плана срокчен пурнӑҫлассишӗн кӗрешме мобилизацилемелле.

— Партин хулари организацийӗ хӑйӗн XV-мӗш конференцине кӗрешӳри пултарулӑхне нихҫанхинчен те ытларах ӳстернипе, партин Центральнӑй Комитечӗ тавра тачӑ пӗтӗҫнипе кӗтсе илчӗ. Хулари парторганизаци Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗ лартнӑ аслӑ задачӑсене чыслӑн пурнӑҫласа пырӗ.

Никитин юлташ доклачӗ тӑрӑх 21 ҫын тухса каларӗ.

Электроаппаратура заводӗнчи парткомӗ секретарӗ Бугаев юлташ заводри парторганизацире партилле-организацилле тата партилле-политикӑлла ӗҫсем чылай лайӑхланнине палӑртрӗ.

(Юлашши 4-мӗш страницӑра).

СССР Верховнӑй Совет Президиумӗнче

Автомобиль транспортне организацилес ӗҫе лайӑхлатас, автомобильсемпе массӑллӑ промышленность тата ялхуҫалӑх грузӗсене турттармалла, пассажирсене лартса ҫӳремелле тӑвас, ҫӗнӗ шоссе ҫулӗсем тӑвас тата вӗсемпе усӑ курассине лайӑхлатас тӗллевпе СССР Верховнӑй Совет Президиумӗ, СССР Министрӗсен Совечӗ тӑратнӑ тӑрӑх, союзлӑ-республикӑллӑ **СССР Автомобиль транспорчӗпе шоссе ҫулӗсен министерстви** туса хунӑ.

СССР Автомобиль транспорчӗпе шоссе ҫулӗсен министерствине СССР Министрӗсен Совечӗ ҫирӗплетнӗ список тӑрӑх предприятисемпе организацисем панӑ.

СССР Автомобиль транспорчӗпе шоссе ҫулӗсен министрӗ пулма Иван Алексеевич **Лихачев** юлташа уйӑрса лартнӑ.

* * *

Ҫӗршывӑн ҫӗр айӗнчи пуянлӑхӗсене геологи енӗпе комплекслӑ тата план тӑрӑх тӗпчесе вӗренес, СССР халӑх хуҫалӑхне кирлӗ чухлӗ ҫӗр айӗнчи усӑллӑ пуянлӑхсен запасне тупса палӑртас тата ҫӗр айӗнчи пуянлӑхсене сыхласа тӑрас ӗҫе лайӑхрах организацилес тӗллевпе СССР Верховнӑй Совет Президиумӗ, СССР Министрӗсен Совечӗ тӑратнӑ тӑрӑх, **СССР Геологи тата ҫӗр айӗнчи пуянлӑхсене сыхласа тӑракан министерство** туса хунӑ, ӑна СССР Министрӗсен Совечӗ ҫирӗплетнӗ список тӑрӑх предприятисемпе организацисем панӑ.

СССР Геологи тата ҫӗр айӗнчи пуянлӑхсене сыхласа тӑракан министрӗ пулма Петр Яковлевич **Антропов** юлташа уйӑрса лартнӑ.

* * *

СССР Верховнӑй Совет Президиумӗ, СССР Министрӗсен Совечӗ тӑратнӑ тӑрӑх, **СССР Авиаци промышленность министерстви** туса хунӑ, ҫак министерствӑна СССР Министрӗсен Совечӗ ҫирӗплетнӗ список тӑрӑх предприятисемпе организацисем панӑ.

СССР Авиаци промышленность министрӗ пулма Петр Васильевич **Дементьев** юлташа уйӑрса лартнӑ.

Ялти ӗҫченсен савӑнӑҫӗ

ВӐРНАР. Районти ялхуҫалӑх ӗҫченӗсем Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗ СССР ялхуҫалӑхне малалла аталантармалли мерӑсем ҫинчен йышӑннӑ постановление пысӑк савӑнӑҫпа кӗтсе илчӗҫ. Халӗ уй-хир бригадисемпе трактор бригадисенче, обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх пӑхакансем патӗнче агитаторсем партин Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗ йышӑннӑ постановление вуласа параҫҫӗ, каласусем ирттереҫҫӗ.

...Каганович ячӗпе тӑракан колхоз итемӗ. Мотор шавӗ хӑватлӑн кӗрлесе тӑрать. Колхозниксем авӑн ҫапаҫҫӗ. Кӑнтӑрлахи апат вӑхӑтӗнче агитатор итем ҫине ҫӗнӗ хаҫатсем илсе пычӗ. Вӑл ял ӗҫченӗсене партин Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗ СССР ялхуҫалӑхне малалла аталантармалли мерӑсем ҫинчен йышӑннӑ постановление вуласа пама тытӑнчӗ. Колхозниксем тата МТС-ри механизаторсем Коммунистсен партийӗ халӑх пурнӑҫне малалла лайӑхлатма тӑвакан ӗҫсене чунтан-чӗререн хавасланса ырлаҫҫӗ.

— Ку постановленипе палласшӑн май ҫук савӑнать. Пирӗн тӑван Коммунистсен партийӗ ялхуҫалӑхне малалла аталантарма усӑмлӑ программа пачӗ. Ӑна пурнӑҫлассишӗн эпир вӑй-хала шеллемесӗр ӗҫлетпӗр,—терӗ каласу вӑхӑтӗнче колхозри хастарлӑ колхозниксенчен пӗри Т. Петров юлташ.

— Ҫӗнӗ постановлени МТС механизаторӗсене ӗҫшӗн тӳлессине ҫӗнӗлле йӗркелеме хушать. Ку пирӗн пурнӑҫа татах лайӑхлатӗ,—хаваслӑн пӗлтерчӗ хӑйӗн шухӑшне МТС комбайнерӗ Г. Иванов юлташ.

Артель членӗсем, ҫӗнӗ постановлени ҫине ӗҫпе ответлес тесе, октябрӗн 1-мӗшне мӗнпур ялхуҫалӑх ӗҫӗсене вӗҫлеме, обществӑлла выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каҫарма лайӑх хатӗрленсе ҫитме пулчӗҫ.

Ҫӗнӗ постановленипе ытти колхозсенчи ял ӗҫченӗсем те савӑнӑҫлӑн паллашаҫҫӗ. Мӑн Турханти Ленин ячӗпе тӑракан колхозра Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗ йышӑннӑ постановлени ҫинчен КПСС райкомӗн секретарӗ И. Александров юлташ каласа пачӗ. Колхозниксемпе колхозницӑсем ӗҫсыннисен пурнӑҫне кунран-кун лайӑхлатса пырассишӗн тӑрӑшнӑшӑн тӑван Коммунистсен партине тав тӑваҫҫӗ.

Колхозлӑ ялсенче пур ҫӗрте те политикӑлла ҫӗнӗ ҫӗкленӳ палӑрать. Партин Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗ йышӑннӑ постановленипе хавхаланса, ял ӗҫченӗсем кӑҫалхи ялхуҫалӑх ҫулне ӑнӑҫлӑн вӗҫлессишӗн ырми-канми ӗҫлеҫҫӗ, тырпул тухӑҫлӑхне тата выльӑх-чӗрлӗх йышӗпе тухӑҫлӑхне ӳстерме тумалли ӗҫсене палӑртаҫҫӗ.

П. ТИХОНОВ.

Колхозсенчи пысӑк ҫӗкленӳ

КӲКЕҪ. Районти колхозсенче колхозниксен пухӑвӗсем пулса иртеҫҫӗ. Колхозлӑ ял ӗҫченӗсем КПСС Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗ йышӑннӑ постановленипе паллашса, ӑна чӗре тулли хаваслӑхпа ырлаҫҫӗ, ӗҫре нихҫанхинчен те пысӑк хавхаланупа ӗҫлеме обязательствӑсем йышӑнаҫҫӗ.

Куйбышев ячӗпе тӑракан колхозри агитаторсем КПСС Центральнӑй Комитечӗн постановленине колхоз членӗсене ӑнлантарса параҫҫӗ, каласусем ирттереҫҫӗ. Колхозри А. Кондратьев колхозник хӑйӗн сӑмахӗнче ҫапла каларӗ:

— КПСС Центральнӑй Комитечӗ ССР Союзӗн ялхуҫалӑхне малалла аталантармалли мерӑсем ҫинчен йышӑннӑ постановлени колхоз хресченӗсен тӗп интересӗсене палӑртса парать, вӑл пирӗн экономикӑпа культурӑна вӑйлатма, пирӗн пурнӑҫа пур енчен те лайӑхлатса пыма условисем туса парать.

КПСС Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗ сентябрӗн 7-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленипе хавхаланса, Куйбышев ячӗпе тӑракан колхозри колхозниксемпе колхозницӑсем ӗҫри хастарлӑха ӳстерсе пыраҫҫӗ. Вӗсем, государствӑна тырӑ памалли плана срокчен тултарнӑ пекех, ялхуҫалӑхӗнчи ытти ӗҫсене те вӑхӑтра туса ирттерессишӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Колхоз сентябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне кӗрхи ҫӗртме тумалли плана пӗтӗмӗшпех тултарчӗ. Колхозниксем сентябрӗн 25-мӗшӗ тӗлне авӑн ҫапса пӗтерме, обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана тултарма, государствӑна выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем памалли обязательствӑна ноябрӗн 7-мӗшӗ тӗлне пурнӑҫлама тӑрӑшаҫҫӗ.

Ф. МАРКОВ.
А. ТИМОФЕЕВ.

Партин Шупашкар хула организацийĕн XV-мĕш конференцийĕ

(Юлашки. Пуçламăшĕ 3-мĕш страницăра).

Бугаев юлташ партин хула комитетне критиклесе, çакăн пек факт илсе кăтартрĕ: заводри партком августăн 28-мĕшĕнче парти пухăвĕ ирттерме йышăннă. Ку пухăва ирттерме лайăх хатĕрленмен. Ун çинчен хула комитечĕн секретарьне Никитин юлташа малтанах пĕлтернĕ. Анчах Никитин юлташ çав пухăва пĕр сăлтавсăрах тепĕр кун ирттерме хушнă.

Унтан Бугаев юлташ хула комитечĕн бюровне чĕннĕ коммунистсен хăйсен ыйтăвĕсене сӳтсе явма тытăнассине нумай вăхăт хушши кĕтсе тăма тивни çинчен каларĕ. Хула комитетĕнче коммунистсем пирки çырнă уйрăм материалсене пăхса тухас ĕçе вăраха тăсаççĕ.

Шупашкар хулин çар комиссарĕ Татаркин юлташ Совет Çарне илмелли черетлĕ призыва лайăх организацилемелли çинчен каларĕ. Ку ĕçре çар комиссариатне совет органĕсен, комсомол тата ытти обществăлла организацисен, уйрăмах парторганизацисен пулăшса пырас пулать. Призыв пункчĕсенче лекцисем, докладсем тата каласусем ирттерме нумай вĕреннĕ юлташсене уйăрмалла. Пухусенче призывниксене Тăван çĕршыва хӳтĕлес ĕçе тӳрĕ кăмăлпа туса пыма наказсем памалла. Çара каякансене ăсатса ярас ĕçе организацилемелле.

Совет Çарĕнчен демобилизаци йĕркипе салтаксем, сержантсем тата матроссем килеççĕ, вĕсене ĕçе вырнаçтарма тăрăшас пулать.

Симонов юлташ (Швейпромсоюз) çапла каларĕ: промысла коопераци килти хуçалăхра куллен кирлĕ япаласем нумай туса кăларма пултарать. Парти организацийĕсен промкоопераци работникĕсем çине тимлĕрех пăхмалла. Анчах хула комитечĕ вĕсене ĕçре тивĕçлипе пулăшмасть.

— Манăн,—тет Симонов юлташ, — партин хула комитетĕнчен артельсенче производствăри новаторсен çĕнĕ çитĕнĕвĕсем çинчен лекцисем организацилеме пулăшу ыйтмалла пулчĕ. Хула комитетĕнче мана электроаппаратура завочĕпе сыхăнма сĕнчĕç, унта инженерсемпе техниксем нумай, вĕсем пулăшма пултараççĕ, терĕç. Заводри лекторсен ушкăнĕн руководителĕ Царев юлташ ку енĕпе техникăлла библиотека пулăшма пултарать, терĕ. Техникăлла библиотекăра пире интереслентерекен ыйтупа нимĕнле материал та тупса параймарĕç, заводри техникăлла информацин пайĕпе сыхăнма сĕнчĕç. Кунтан пире Буйволов юлташ патне ячĕç. Эпир çӳрерĕмĕр-çӳрерĕмĕр, анчах усси пулмарĕ. Лекци бюровĕнчен пулăшу ыйтрăмăр, унта та пирĕн кирлĕ лекци çук. Юлашкинчен Политикăпа наука пĕлĕвĕсене сарас тĕлĕшпе ĕçлекен обществăна çитрĕмĕр. Эпир техника темипе лекци вуласа паракана шырани çинчен пĕлсен, общество работникĕсем пире каллех Буйволов юлташ патне кайма сĕнчĕç. Çапла вара эпир производствăри новаторсем çинчен лекци организацилеме пултараймарăмăр.

Козоровицкий юлташ Чăваш академи театрĕнче вырăс театрĕ лайăххăн ĕçлеме пуçланине палăртрĕ, театрсен ĕçне лайăхлатас енĕпе тăракан задачăсем çинчен каласа пачĕ. КПСС хула комитечĕпе обкомĕ чăваш драматургийĕ енĕпе ĕçе лайăхлатма кирлĕ пек тăрăшмаççĕ. Искусство работникĕсен йăла условийĕсене лайăхлатма сахал пулăшаççĕ.

— Эпир çапла тăвасшăн, — тет вăл,—пирĕн спектакльсем çинчен сӳтсе явччăр, вĕсенче лайăххи мĕн пуррине, мĕнле çитменлĕхсем пуррине каласа парччăр. Халлĕхе çавна тумаççĕ-ха. Ку енĕпе театра республика хаçачĕсем те сахал пулăшаççĕ. Театр массăсене идеологилле воспитани пама нумай пулăшать. Анчах парторганизацисем халăха театрти спектакльсене курма ытларах çӳретес ĕçре сахал пулăшса пыраççĕ-ха.

Чăваш АССР Культура министерствин радиоинформаци пайĕн заведующийĕ **Давыдов** юлташ вырăнти радиовещани задачисем çинчен каларĕ. Вăл партин хула комитечĕ радио ĕçĕпе интересленменнине палăртрĕ. Республикăн ертсе пыракан работникĕсенчен хăшпĕрисем микрофон умĕнче тухса калаçма, ĕççыннисене хуçалăхпа культура строительствинчи пысăк задачăсем çинчен каласа пама килĕшмеççĕ. Радио енĕпе ĕçлекен кадрсем çитмеççĕ. Юлашки виçĕ çул хушшинче радиоинформаци енĕпе ĕçлекенсенчен пĕр работнике те парти шкулĕсене вĕренме яман. Хăшпĕр чухне радиоинформаци пайĕнче ĕçлеме тепĕр çĕрте киревсĕр ĕçсем тунă çынсене яраççĕ. Радиоинформаци пайĕнчи работниксен ĕç условийĕсене лайăхлатмалла. Ку пай кивĕ çурта вырнаçнă. Республика Министрĕсен Совечĕ радиоинформаци пайĕ валли юрăхлă çурт пама мерăсем йышăнмасть.

Миронов юлташ (Сосновка поселок Совечĕн председателĕ) хулан Атăл леш енчи пайĕнче хуçалăхпа культура строительстви мĕнле пыни çинчен каласа пачĕ. Атăл леш енче 15 предприяти. Унта электростанци ĕçлет, торф кăлараççĕ, скипидар, сильа тăваççĕ, йывăç касса хатĕрлеççĕ. сухăр пухаççĕ, йывăçран хăмăрк тăваççĕ, сĕтел-пукан тата ытти япаласем туса кăлараççĕ. Предприятисенчен нумайăшĕ планĕсене ăнăçлă тултарса пыраççĕ. Анчах хăшпĕр предприятисем начар ĕçлеççĕ. «Парат» артель хуларан 25—30 километрта. Вăл начар ĕçлет. Артеле ертсе пыраканĕсене час-час улăштараççĕ. Кунта политикăлла воспитани ĕçне япăх йĕркеленĕ. Партин хула комитечĕн работникĕсем артеле пырса курмаççĕ. Унта промкоопераци работникĕсем те пулмаççĕ.

Миронов юлташ малалла Шупашкар вăрман хуçалăхĕн директорĕ Таврин юлташ мăнкăмăлланса кайни, критикăна хисеплеменни, киревсĕр ĕçсем туни çинчен каларĕ. Парти пухăвĕ пухăнмалла чухне, Таврин хăй тĕллĕнех çав пухăва ирттерме чарнă. Ăна поселок Совечĕн исполкомĕ ларăвĕсене е поселок Совечĕн сессине пыма чĕнсен, вăл унта пымасть.

Милици республикăри управленийĕн начальникĕ **Архипов** юлташ сăмах илет. Вăл юлашки вăхăтра партин хула комитечĕпе обкомĕ, республика Министрĕсен Совечĕ обществăлла йĕркелĕхе хӳтĕлес ыйтусене сӳтсе явни çинчен каласа парать. Çавăн чухне милици органĕсен, судпа прокуратура ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене, уголовнăй айăп тунисене тата хулиганла ĕçсене хирĕç кĕрешесси кирлĕ пек пулса пыманнине палăртнă. Айăплисене наказани панипе пĕр вăхăтрах политикăлла воспитани парас ĕçе вăйлатмалла, çапла майпа социализмла общежити правилисене пăсассине малтанах сирсе ямалла.

Электроаппаратура завочĕн, «Легпромстройăн» 11-мĕш трестĕн коллективĕсенче тата ытти хăшпĕр коллективсенче çамрăксене воспитани парас ĕçе начар йĕркеленĕ.

Хулара социализмла пурлăха çаратакансене хирĕç кĕрешес ĕçе кирлĕ пек туса пымани çинчен оратор чылай каларĕ. Ку енĕпе вăл нумай тĕслĕхсем илсе кăтартрĕ.

Унтан конференци мандат комиссийĕн председателĕ Швечков юлташ тунă доклада итлерĕ. Ку доклада, пурте пĕр саслă пулса, çирĕплетнĕ.

Ялхуçалăх институчĕн партбюро секретарĕн заместительне **Черноруков** юлташа сăмах параççĕ. Вăл партин хула комитетне институтри парторганизацие çителĕксĕр ертсе пынăшăн критиклет. Ялхуçалăх институтĕнче нумай вăхăт хушши партбюро секретарĕ пулман. Институтра хула комитечĕн секретарĕсенчен пĕри те пулман. Обком секретарĕсем института пырса курмаççĕ. Парти решенийĕсем çинчен институт директорне Калинцев юлташа çеç пĕлтернĕ, партбюро секретарьне институт ĕçĕсем пирки ыйтусене мĕнле татса пани çинчен те пĕлтермен. Çакăн пек практика ака мĕн патне илсе пынă: институт директорĕ Калинцев юлташ критикăна йышăнман, критиклесе каланисем çине сиввĕн пăхнă, институт коллективĕнчен уйрăлса кайнă.

ВЛКСМ хула комитечĕ институтри комсомол организацине кирлĕ пек ертсе пымасть.

Атăл леш енчи электростанцин директорĕ **Зубов** юлташ хулана электричество энергийĕ парса тăрас ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе юлашки вăхăтра мĕн туни çинчен конференцие пĕлтерчĕ.

ДОСААФ-ăн хулари оргкомитет председателĕ **Корснов** юлташ пуçламăш парторганизацисене оборонăлла-массăллă ĕçе лайăхлатма тăрăшманшăн критиклерĕ.

Захарцев юлташ (Чапаевски поселок) вырăнти строительство материалĕсен промышленносĕн управленийĕ питех те начар ĕçлени çинчен каларĕ. Строительство материалĕсем çитменни капитальнăй строительствăна пурнăçлас тата хулана лайăхлатса илемлетес ĕçсене чарса тăрать.

Хула Совет исполкомĕн председателĕ **Енчиков** юлташ юлашки çулсенче Шупашкар сăн-сăпачĕ мĕнле улшăнса пынине тĕслĕхсемпе кăтартса пачĕ. Хулара çĕнĕ предприятисем, пурăнмалли çуртсем, шкулсем тăваççĕ, анчах пурăнмалли çуртсем нумай çитмеççĕ. Предприятисемпе ведомствăсене ертсе пыракансем пурăнмалли çурт-йĕр кирлĕ таран тăвассишĕн çителĕклĕ тăрăшмаççĕ. Çĕнĕрен тунă çуртсен пахалăхĕ начар.

— Промышленность предприятийĕсене тата парти организацийĕсене ертсе пыракансен, — тет Енчиков юлташ, — пурăнмалли çурт-йĕрсем тăвас ĕçĕн калăпăшне хăвăрт ӳстермелле. ку ĕçе тума панă укçа-тенкĕпе пĕтĕмпех усă курмалла тата çуртсене кăтартнă срокченче туса пĕтерсе ĕçе кĕртмелле.

Енчиков юлташ конференцире тухса калакансем хула Совечĕн исполкомне критиклени, пĕтĕмĕшпе илсен, тĕрĕс тесе йышăнать. Вăл хула хуçалăхне йĕркелес, суту-илĕве лайăхлатас, ĕççыннисен культурăпа йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе малашне тумалли ĕçсем çинчен каласа пачĕ.

Пир-авăр комбиначĕн главнăй инженерĕ **Васильева** юлташ комбинат коллективĕн ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ. Кунти рабочисенчен нумайăшĕ — çамрăксем. Коллектив производство планне тултарма пултарать, анчах унăн производство планне тултарнипе пĕр вăхăтрах, строительство ĕçĕсене тума, çĕнĕ техникăна вĕренсе пыма тата ытти çавнашкал ĕçсене те тума тивет. Комбинат ĕçĕнче йывăрлăхсем те сахал мар, анчах хула комитечĕ ăна çителĕклĕ пулăшса пымасть. Хула комитечĕн секретарĕсем комбинат тунă çĕре пырсан та директор патне çеç кĕрсе тухаççĕ, рабочисем хушшинче питĕ сахал пулаççĕ.

Рабочисем валли пурăнмалли çурт-йĕрсем лартас тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсем тăвас пулать, тет Васильева юлташ. Комбинатра столовăй ӳсес ыйтăва халĕ те татса паман. Каçхи сменăра буфет ĕçлемест. Нумай рабочисем хулара пурăнаççĕ, анчах автобуссен йĕркеллĕ çӳременни пысăк чăрмав пулса тăрать.

Васильева юлташ хулан главнăй архитекторне Мамаев юлташа критиклет. Комбината ертсе пыракансем Мамаев юлташран темиçе çурт проектне тума архитектурăпа план заданийĕ пама пĕрре кăна мар ыйтнă. Юлашкинчен çак кунсенче Мамаев юлташ ФЗО шкулĕпе мунча тума план пачĕ. Тĕлĕнмелле: мунчине вăл хальхи вăхăтра рабочисем пурăнакан икĕ çурт вырăнне туса лартма хушать. Мамаев юлташ Шупашкарта малаллахи строительство ĕçне чарса пырать.

Парти хула комитечĕ комбинат ĕçне тĕплĕ пĕлсе тăмалла, унăн кунти парторганизацине тăтăшах пулăшса пымалла.

Комсомол хула комитечĕн секретарĕ **Алфер** юлташ партин хула комитечĕ юлашки вăхăтра комсомола ертсе пырас ĕçе лайăхлатнине палăртать. Комсомол хула комитечĕн ĕçĕсем çинчен парти хула комитечĕн пленумĕнче сӳтсе явнă. Çапах та комсомол организацийĕсене ертсе пырасси çине хула комитетĕнче ĕçлекенсем пурте тивĕçлипе пăхмаççĕ.

— Хулари парторганизацие ертсе пыракан работниксем,—тесе палăртать оратор,—çамрăксене лекцисемпе докладсем туса памаççĕ. Хула комитечĕн секретарĕсем тата пайсен заведующийĕсем комсомол хула комитечĕн бюро ларăвĕсенче сайра хутра çеç пулаççĕ, çавăн пирки эпир хамăр ĕçри кăткăс ыйтусене татса пама кирлĕ пулăшăва вăхăтра илейместпĕр.

Хăшпĕр пуçламăш парторганизацисем комсомол организацийĕсене начар ертсе пыраççĕ. Сăмахран, çăкăр пĕçерекен комбинатри çамрăксем хушшинче ĕç дисциплини кирлĕ вырăнта тăмасть. Апла пулин те кунта политикăлла воспитани ĕçне начар туса пымаççĕ, кăçал комсомола пĕр çамрăка та илмен.

Ленин ячĕпе тăракан çĕвĕ фабрикинче ĕçлекенсенчен нумайăшĕ çамрăксем. Паллă ĕнтĕ, çамрăксем вĕренме тăрăшаççĕ. Анчах фабрика директорĕ Рыжова юлташ çамрăксене каçхи шкула вĕренме çӳреме чарса тăрать. Унăн шучĕпе вĕренӳ производствăна чăрмантарать имĕш. Нумаях пулмасть, вăл пĕр комсомолкăна ĕçрен тухма ыйтакан заявлени çыртарнă, мĕншĕн тесен лешĕ каçхи шкулта вĕреннĕ.

Конференцире КПСС обкомĕн секретарĕ **Т. А. Ахазов** юлташ тухса каларĕ. Вăл конференци делегачĕсем партин хула комитетне, çавăнпа пĕрлех обкома та промышленноçа тата ĕççыннисен культурăпа йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерессине ертсе пырас ĕçри пысăк çитменлĕхсемшĕн тивĕçлипе критикленине палăртрĕ. Партин хула комитечĕ тата промышленность предприятийĕсемпе организацийĕсене ертсе пыракансем партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене çителĕксĕр пурнăçласа пыраççĕ, предприятисене татăклă ертсе пымаççĕ. Çавăн пирки те плана тултарман предприятисен шучĕ хулара чакма мар, ӳсрĕ.

Ахазов юлташ халăха кирлĕ таварсем туса кăларассине ӳстерес задачăсем çинче чарăнса тăчĕ. Вăл чăлха фабрики, хулари промкомбинат, çĕвĕ çĕлекен мастерскойсем, «Красный мебельщик» артель хăйсен планĕсене тултарманнине палăртать. Куллен кирлĕ таварсен пахалăхĕ начар.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви халăхăн материальнăй пурнăçне лайăхлатассишĕн тата культурăлла шайне ӳстерессишĕн ывăнма пĕлмесĕр куллен тăрăшаççĕ. Халĕ халăха кирлĕ таварсем туса кăларассине нумай ӳстерес задача тăрать. Хула комитечĕн тата хула Совет исполкомĕн çак ĕçе куллен ертсе пымалла. Вырăнти тата коопераци промышленноçĕнчи çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерес пулать. Халăха кирлĕ лайăх таварсем туса кăларассине ӳстермелле, ĕççыннисен йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен мастерскойсен шутне нумайлатмалла, коммунальнăй предприятисен, культурăпа сывлăх учрежденийĕсен, суту-илӳ организацийĕсен ĕçĕсене лайăхлатмалла, пурăнмалли çуртсем тата культурăпа йăла учрежденийĕсем тăвас ĕçĕн планне пурнăçа кĕртмелле. Партин хула комитечĕ ку тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлемен.

Ахазов юлташ ССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ йышăннă решенисем çинчен, çавна май хулари парторганизаци умĕнче тăракан задачисем çинчен каласа пачĕ. МТС-сенче механиксем, агрономсем, зоотехниксем, çавнашкалах колхоз председателĕсем пулса ĕçлеме хулари организацисен чылай работникĕсем памалла пулать.

Хулари парторганизацин КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ йышăннă постановлени çинчен хулари ĕççыннисене тĕплĕн ăнлантарса памалла. Парти халăхăн материальнăй пурнăçне лайăхлатма тата культурăлла шайне ӳстерме тăрăшнипе хавхаланса, хулари ĕççыннисене производство планĕсене хисеп тĕлĕшпе те, пахалăх тĕлĕшпе те ытлашшипех тултарма мобилизацилемелле.

Юлашкинчен Ахазов юлташ хулари парторганизацинче партилле-организациллĕ тата партилле-политикăлла ĕçе вăйлатма кирлине палăртать.

Пренире **Веселовцев** (апат-çимĕç комбиначĕ), **Иванов** (КПСС обкомĕ çумĕнчи парткурсран), **Щеглов** (Госбанк), **Дмитриев** (Чапаевски поселок), **Ефимов** (электроаппаратура завочĕ) **Васильева** (Трахома институчĕ) юлташсем тухса каларĕç.

Конференци тивĕçлĕ постановлени йышăнчĕ, КПСС хула комитечĕн отчетлă тапхăрти ĕçне вăтам тесе хак пачĕ.

Ун хыççăн конференци вăрттăн сасăласа хула комитечĕн членĕсемпе кандидачĕсене тата ревизи комиссии членĕсене суйларĕ.

ООН Генеральнăй Ассамблейин VIII-мĕш сессийĕ уçăлнă

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 15-мĕшĕнче Мускав вăхăчĕпе 23 сехетре ООН Генеральнăй Ассамблейин VIII-мĕш сессийĕ уçăлнă.

Малтанлăха палăртнă кун йĕркинче 70 ыйту ытла тăрать. Вĕсем хушшинче—ООН генеральнăй секретарĕн Организаци ĕçĕсем çинчен тăвакан доклад, Хăрушсăрлăх Совечĕн, Экономикăпа Социальнăй советăн, Опека енĕпе ĕçлекен советăн докладчĕсем, Хăрушсăрлăх Совечĕн яланлăха уйăрман виçĕ членне, Экономикăпа Социальнăй советăн ултă членне, Опека енĕпе ĕçлекен советăн икĕ членне суйласси, ООН-а çĕнĕ членсем илесси çинчен тăракан ыйту; хĕçпăшалсăрланас, мĕнпур хĕçпăшаллă вăйсемпе хĕçпăшалсене йĕркелесе, пӳлсе тăрасси çинчен тата виçеллĕ чакарса пырасси çинчен тăракан ыйту енĕпе ĕçлекен комиссин докладĕ.

Азири çĕршывсемпе араб çĕршывĕсем тата ыттисем те сĕннипе Генеральнăй Ассамблейăн малтанлăха палăртнă кун йĕркине кĕртнĕ ыйтăва—Тунис тата Марокко ыйтăвĕсене те сӳтсе явмалла пулать.

Бирма правительстви сĕннипе Генеральнăй Ассамблейăн гоминдан ушкăнĕ Бирма Союзне хирĕç тăвакан агрессиллĕ ĕçсем çинчен сӳтсе явмалла.

Малтанлăха палăртнă кун йĕркине çавăн пекех тата вăйсăр аталаннă çĕршывсене экономика енĕпе аталантарасси çинчен тата çак çĕршывсене техника енĕпе пулăшу парасси çинчен тăракан ыйтăва тата ытти ыйтусене те кĕртнĕ.

Анчах Генеральнăй Ассамблейăн VIII-мĕш сессийĕн кун йĕркинче тăракан ыйтусем çаксемпе кăна вĕçленмеççĕ. Генеральнăй Ассамблейăн процедура правилисем тăрăх, Ассамблея ĕçленĕ вăхăтра та сессин кун йĕркине ытти ыйтусем те кĕртме пулать.

Процедура правилисем тăрăх, сессие Генеральнăй Ассамблейăн VII-мĕш сессийĕн председателĕ — Канада представителĕ Пирсон кĕске сăмах каласа уçнă. Вăл делегатсен полномочийĕсене тĕрĕслеме Куба, Исланди, Индонези, Çĕнĕ Зеланди, Перу, Сири, СССР, Англи, США представителĕсенчен комисси уйăрма сĕннĕ. Комисси йышне Ассамблея пĕр саслă пулса ырланă.

Ассамблея VIII-мĕш сесси председательне суйлама тытăнас умĕн Совет Союзĕн представителĕ А. Я. Вышинский кун йĕрки тăрăх сăмах илнĕ. Вăл, Китай Халăх Республикин представителĕсен Генеральнăй Ассамблейăра тата ООН-ăн ытти органĕсенче Китайăн законлă вырăнĕсене йышăнмалла тесе, сĕнӳ тăратнă.

Вышинский çакна кăтартса панă: чылай ыйтусене, тĕслĕхрен, Корея ыйтăвне Китай Халăх Республикин представителĕсем хутшăнмасăр татса пама хăтлани практикăлла результатсем пама пултараймасть. Йĕркеллĕ мар тата чăтма çук ĕçе пĕтерме, ООН Уставне пăснине пĕтерме вăхăт çитрĕ ĕнтĕ, тенĕ СССР представителĕ.

США представителĕ Даллес: Китай Халăх Республикин представителĕсем ООН-ра пуласси çинчен тăракан ыйтăва Генеральнăй Ассамблейăн кăçал пăхса тухмалла мар, тесе сĕнӳ панă. Польша, Украина ССР, Чехословаки тата Белорус ССР представителĕсем СССР сĕнĕвĕ майлă пулса каланă, Англи представителĕ Америка сĕнĕвне хӳтĕленĕ.

Украина ССР представителĕ Барановский çакна палăртнă: Пĕрлешӳллĕ Штатсем тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатасси патне илсе пыракан ыйтусене мирлĕ майпа татса парассине кансĕрлес шутпа кăна тĕрлĕ маневрсем тăваççĕ, ООН-ра гоминдан ушкăнне законсăр йĕркепе Китай вырăнĕнче тытса тăма тăрăшаççĕ.

Иккĕмĕш хут тухса каласа, А. Я. Вышинский çакна кăтартса панă: Даллес çак ыйтăва пăхса тухассине тепĕр вăхăта хăварма тата ыйтăва çак сессире татса памалла мар тесе сĕнет пулсан та, США представителĕ, чăннипе, Китай халăхĕн законлă прависене татса парас ыйтăва яланлăхах пăхса тухмалла мар тума тăрăшать.

Генеральнăй Ассамблея 40 сасăпа (8 сасă хирĕç пулнă тата 8 делегаци нихăш майлă та сасăламан) малтан США сĕнĕвне сасăлама йышăннă. Çак сĕнӳшĕн 44 сасă пулнă, ăна хирĕç 10 делегаци сасăланă, 2 делегаци нихăш майлă та сасăламан. Çапла вара Китай Халăх Республикин представителĕсене ООН-а кĕртесси çинчен тăракан ыйтăва сӳтсе явассине тепĕр вăхăта хăвармалла тесе США тăратнă сĕнĕве йышăннă. Ассамблея США сĕнĕвне йышăнни СССР сĕнĕвне «сасăлама кирлĕ мар туса хурать» текен сăлтавпа СССР сĕнĕвне сасăлама тăратман.

Генеральнăй Ассамблейăн VIII-мĕш сессийĕн председателĕ пулма Инди представительницине Пандит Неруна суйланă.

Чехословакири Наци пухăвĕн сессийĕнче

ПРАГА, сентябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Чехословакири Наци пухăвĕн кĕркуннехи сессийĕ уçăлнă.

Ирхи ларура Наци пухăвĕ правительство министерствăсене çĕнĕлле йĕркелесси çинчен йышăннă мерăсене тата республика президенчĕ Антонин Запотоцкий правительствăри вырăнсене çĕнĕрен çынсем уйăрса лартнине çирĕплетнĕ.

Çакăн хыççăн Наци пухăвĕ Наци пухăвĕн председателĕ Олдржих Йон отставкăна тухнине йышăннă, депутатсен пĕр ушкăнĕ сĕннипе Наци пухăвĕн председателĕ пулма депутат Зденек Фирлингера суйланă. Ян Гарус депутата Наци пухăвĕн председателĕн заместителĕ пулма суйланă.

Наци пухăвĕ премьер-министр В. Широкий вуласа панă правительство заявленине итленĕ. Заявленире шалти тата тулашри политика ыйтăвĕсем тăрăх правительство программине палăртнă.

Правительство заявленине итленĕ хыççăн, Наци пухăвĕ пĕр шухăшлă пулса правительствăна шанса тăнине палăртнă.

Тĕнчери шахмат турнирĕнче

ЦЮРИХ, сентябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер тĕнчере малти вырăна тухассишĕн пыракан шахмат турнирĕн 10-мĕш вăййинче турнир лидерĕсем — Решевскипе Смыслов хушшинчи парти тĕп вырăнта тăнă. Ку парти пуринчен малтан вĕçленнĕ. Икĕ енĕ те никам та выляса илмен тесе килĕшнĕ. Бронштейнпа Геллер, Авербахпа Сабо хушшинчи вăййă та никам çĕнтерейменнипе вĕçленнĕ.

Ытти партисене тепĕр вăхăта хăварнă. Таймановпа Болеславский хушшинчи вăйăра Таймановăн пĕр пешка ытларах, Петросянпа Эйве хушшинчи вăйăра Петросянăн пĕр пешка ытлашши пур. Анчах та çак ытлашши пешкăсемпе усă курса çĕнтерӳ тума Таймановпа Петросяна йывăр пулать. Найдорфпа Штальберг хушшинчи партие тепĕр вăхăта хăварнă. Найдорфăн выляса илме май пур. Глигоричпа Котов хушшинчи партире совет гроссмейстерĕн выляса илме май пур.

Колхозсенчи физкультурниксен Пĕтĕм Российăри ăмăртăвĕ вĕçленнĕ

Чăваш АССР спортсменĕсем иккĕмĕш вырăн йышăннă

Ĕнер Сталинградра колхозсенчи физкультурниксен Пĕтĕм Российăри виççĕмĕш спартакиадин юлашки ăмăртăвĕсем вĕçленнĕ.

«Колхозник» обществи чемпионĕн хисеплĕ ятне илессишĕн Россия Федерацийĕнчи 1.300 яхăн спортсмен тăватă кун хушши ăмăртнă. Ăмăртăван юлашки кунĕнче Бурят-Монгол АССР-ĕнчи çамрăк физкультурница, ялти учительница Ч. Сыжипова тепĕр пысăк çитĕнӳ тунă. Вăл çăмăл атлетсен нумай енлĕ кĕрешĕвĕнче 3.335 очко илнĕ. Çакă вăл «Колхозник» спорт обществин çĕнĕ çитĕнĕвĕ пулать. Сыжипова юлташ йĕтре ывăтса, вăл хăй виçĕ кун каярах тунă «Колхозник» спорт обществин рекордне тепĕр хут лайăхлатнă, йĕтрене 11 метр та 78 сантиметр тарана ывăтнă.

Çăмăл атлетсен пилĕк тĕрлĕ спорт ăмăртăвĕ енĕпе арçынсем хушшинче Чăваш АССР спортсменĕ Р. Камалтдинов пĕрремĕш вырăн йышăннă. Вăл 2.855 очко илнĕ.

Новосибирск облаçĕнчи ялти шкулта вĕрентекен преподаватель Е. Елизаров 110 метра барьерсем урлă касса чупас енĕпе пĕрремĕш вырăн йышăннă. Вăл 110 метра 17,9 секунд хушшинче чупса тухнă.

Сăнă ывăтас енĕпе общество чемпионĕн ятне спорт мастерĕ И. Большаков (Грозный облаçĕ) илнĕ. Вăл сăнăна 58 метр та 54 сантиметр ывăтнă. Сурçĕр Осети представителĕ Кабанов виçĕ хут сикс (тройной прыжок) 12 метр та 99 сантиметр тарана сикнĕ, малти вырăна тухнă.

Арçынсен командисем хушшинчи эстафетăлла чупу интереслĕ иртнĕ. Пĕрремĕш вырăна Чăваш АССР команди йышăннă.

Хĕрарăмсем 400 метра ирĕклĕ стильпе ишсе тухас тĕлĕшпе ăмăртнă. Ăмăртура Мускав облаçĕнчи Раменское районĕнчи «Пламя» ялхуçалăх артелĕнчи О. Тарыгина колхозница малти вырăна тухнă.

Сталинград сывăхĕнче велосипедпа чупакансен кросĕ пулса иртнĕ. Арçынсем 30 километра, хĕрарăмсем 10 километра чупнă. *Арçынсем хушшинче Грозный* облаçĕнчи «Путь к коммунизму» ялхуçалăх артелĕнчи колхозник В. Титов, хĕрарăмсем хушшинче—Грозный облаçĕнчи «Вперед» колхозри звеньевая М. Таранова малти вырăна тухнă.

Тăватă кун хушши пынă ăмăртура колхозсенчи физкультурниксем «Колхозник» спорт обществин 11 рекордне тунă. Çăмăл атлетика. шывра ишес тата велосипедпа чупас енĕпе ăмăртура Мускав облаçĕнчи физкультурниксем малти вырăна тухнă. Иккĕмĕш вырăна—Чăваш АССР спортсменĕсем, виççĕмĕш вырăна—Краснодар крайĕн представителĕсем йышăннă.

М. Горький ячĕпе тăракан драма театрĕнче колхозсенчи физкультурниксен Пĕтĕм Российăри виççĕмĕш спартакиади хупăннă ятпа вечер пулса иртнĕ. Ăмăртура малти вырăна тухнисене парнесемпе дипломсем панă.

Сталинград, сентябрĕн 17-мĕшĕ.

В. ДМИТРИЕВ,
ТАСС корреспонденчĕ.

Пултаруллă машиновед

Пăрачкав МТС-ĕн трактористчĕ Федор Александрович Бубнов юлташ çуракн тата ирхи çĕртме тунă çĕрте аван ĕçлерĕ. Август уйăхĕнчи опытлă механизаторпа Молотов ячĕпе тăракан колхозра «МС-1100» молотилкăпа авăн çапма янă.

Колхоз йтемĕ çине вăл трактор тата «МС-1100» молотилка илсе пынă. Федор Бубнов пĕр вăхăтрах тракторист тата машиновед пулса ĕçлет. Икĕ машини те лайăх ĕçлеççĕ. Молотилкăран тырă таттисыпписĕр тухать.

Ф. Бубнов юлташăн Молотов ячĕпе тăракан колхоза 300 гектар çинчи ыраша тата 100 гектар çинчи вире çапса памалла. Вăл колхозниксемпе пĕрле 400 тонна тырă çапнă. Çапла Ф. Бубнов юлташ хăй ĕçлекен молотилкăпа куллен 16-шар тонна тырă çапнă.

В. ТОНЫШЕВ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

СССР халăх хуçалăхне юсаса малалла аталантармалли иккĕмĕш государственнăй заем

Облигацисен хакне тӳлемелли 2-мĕш вылявĕн

СПРАВКА-ТАБЛИЦА

Выляв 1953 çулхи сентябрĕн 7-мĕшĕнче Симферополь хулинче пулнă.

Вылявра тухнă серисенчи облигацисене 1953 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа облигаци хакне тӳлесе илеççĕ.

Çакăнта кăтартнă серисенчи мĕнпур 50 облигацие (01-мĕш номертен пуçласа 50-мĕш номера çитиччен) облигаци хакне тӳлесе илмелле тухнă:

Сери №№	Сери №№	Сери №№	Сери №№	Сери №№
020050	023796	027536	031248	035898
020093	023839	027540	031340	035968
020119	023847	027549	031473	036011
020174	023864	027630	031494	036035
020181	023916	027665	031543	036155
020241	023931	027727	031690	036175
020306	023949	027785	031747	036189
020308	023989	027831	031762	036281
020311	024058	027937	031767	036324
020353	024069	027940	031877	036343
020354	024101	027943	031931	036375
020403	024182	027961	031959	036400
020420	024187	028013	031989	036453
020428	024243	028040	032101	036459
020448	024250	028045	032204	036499
020503	024341	028055	032229	036599
020525	024356	028084	032389	036625
020600	024373	028090	032391	036650
020603	024384	028135	032424	036696
020655	024428	028182	032497	036699
020718	024440	028245	032603	036703
020727	024446	028267	032863	036736
020729	024482	028272	032878	036788
020820	024540	028324	032899	036855
020839	024669	028328	032932	036873
020875	024714	028371	032960	036905
020958	024826	028432	033067	036958
021046	024828	028546	033097	036966
021101	024890	028553	033099	036979
021104	025013	028649	033124	036994
021207	025017	028681	033159	037071
021225	025023	028699	033168	037075
021260	025169	028742	033281	037089
021284	025192	028788	033325	037107
021293	025236	028809	033336	037182
021299	025268	028870	033379	037206
021357	025283	028895	033385	037208
021359	025303	028915	033428	037283
021362	025346	028922	033474	037310
021380	025348	028933	033483	037319
021394	025359	028977	033550	037349
021415	025390	028981	033560	037424
021421	025394	029026	033565	037429
021462	025407	029036	033616	037472
021504	025435	029040	033663	037527
021536	025463	029095	033709	037607
021552	025465	029110	033825	037629
021572	025466	029192	033978	037662
021632	025609	029207	034102	037704
021652	025622	029212	034201	037738
021693	025633	029232	034223	037740
021711	025692	029359	034229	037839
021714	025772	029389	034245	037842
021727	025785	029401	034275	037867
021829	025828	029447	034290	038075
021879	025837	029472	034302	038100
021931	025979	029539	034305	038110
022036	025995	029583	034326	038126
022039	026010	029593	034347	038160
022048	026027	029602	934402	038168
022061	026040	029687	034424	038185
022109	026069	029721	034465	038188
022145	026247	029779	034499	038206
022390	026335	029788	034541	038229
022403	026352	029990	034584	038233
022413	026360	030003	034594	038269
022432	026419	030006	034615	038298
022444	026484	030032	034657	038328
022493	026555	030089	034712	038489
022503	026575	030163	034718	038583
022532	026616	030166	034748	038728
022545	026668	030169	034899	038787
022650	026804	030189	034912	038833
022679	026808	030250	034940	038843
022855	026841	030355	034967	038919
022874	026869	030381	035065	038970
022891	026870	030453	035216	038976
022902	026938	030501	035217	039040
022946	026962	030519	035240	039115
022972	026990	030539	035241	039142
023034	026997	030540	035356	039176
023187	027047	030549	035404	039463
023225	027068	030671	035424	039489
023257	027089	030795	035455	039509
023274	027106	030809	035471	039543
023302	027162	030812	035554	039558
023368	027180	030843	035575	039643
023387	027218	030845	035605	039681
023440	027236	030867	035606	039691
023476	027242	030891	035607	039699
023479	027243	030903	035609	089767
023539	027268	030911	035661	039780
023552	027298	030948	035666	039798
023591	027326	030971	035704	039799
023614	027327	030995	035732	039802
023633	027340	031032	035771	039851
023701	027376	031069	035787	039866
023710	027390	031072	035812	039938
023745	027425	031098	035817	039949
023782	027488	031185	035831	039997

ЧĂВАШ АССР ПЕРЕКЕТ КАССИСЕМПЕ ГОСУДАРСТВО КРЕДИЧĔН УПРАВЛЕНИЙĔ.

КИНО

«РОДИНА»—сентябрĕн 18-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче «Секретарь райкома», 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланакан сеанссенче «Пармская обитель» (иккĕмĕш сери).

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01469 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Тираж 20.000 экз.